Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр.

1938 ЙАНВАР 29 ШАМАТКУН 23 (4836) -мӗш №

Чӑваш Коммунӗ

20-мӗш çул тухать ● ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗçтӑвкомӗн хаçачӗ ● Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн 0—67; Ред. заместителӗн 0—88; Редакци секретарӗн 4—40; Дежурнӑйӑн 6—23

Тӗрӗс мар кӑларнисене кайала илмеле, елекçӗсене хытӑ айӑпламала

Партин Сталинла Тӗп Комитет пленумӗн çак кунсенче пичетлесе кӑларнӑ решенине парти организацисенче сӳтсе йавма тытӑнчӗç. Парти руководителӗсем, парти рйадовой членӗсем Парти Тӗпкомӗн Пленумӗ хӑйӗн постановленинче пит те тӳррӗн тата хыттӑн уçса кӑтартнӑ йӑнӑшсене тавçӑрса илме тӑрӑшаççӗ. Пӗтӗм шухӑш пӗр тӗллевре: коммуниссене партирен кӑларнӑ чухне тунӑ йӑнӑшсене кӗске срукра тӳрлетмеле, партирен кӑларнисем панӑ апелљацисем çине формалљнӑ-бӳрократла пӑхнине кӗске срукра пӗтермеле.

Пленум решенине пурнӑçа кӗртес тӗлӗшпе практикӑлӑ ӗç пуçланать. Задачӑ чи малтан çакӑнта тӑрать: карйериссем, хӑйсене айӑпласран çӑлӑнса йулма тӑрӑшакансем, маскӑпа витӗннӗ тӑшмансем тӑрӑшнипе партирен тивӗççӗр кӑларнӑ йулташсене кайала парти ретне илмеле.

Пленум, партирен кӑларнисем панӑ апелљацисене пурне те 3 уйӑх хушшинче пӑхса тухма хушрӗ. Пленум: „Пирӗн партирен кашни тӗрӗс мар кӑларнийех парти тӑшманӗсемпӗн усӑлӑ ӗç пулнине ӑнланмасӑр, тӗрӗс мар кӑларнисем пирки тунӑ йӑнӑша тӳрлетни парти авторитетне çухатма тата халӑх тӑшманӗсене тӑрӑ шыв çине кӑларас ӗçе сийен кӳме пултарать тесе шутлакан"—парти руководителӗсене хытӑ сивлерӗ.

Кашни парторганизаци кайала çавӑрӑнса пӑхмала. Партирен кӑларнисен апелљацисене пленум решенине килӗшӳлӗ тӗрӗс пӑхса тухмала.

Практикӑ çакна кӑтартать: нумай организацисем хӑйсем тунӑ йӑнӑшсене хӑвӑрт тӳрлетме шутламаççӗ. ПСК(б)П Тӗпкомӗн постановленинче Курск Обкомӗ Дмитро-Тарановски сахӑр заводӗнчи завком председателне, Иванченковӑна нимӗн тӗрӗслемесӗрех, хӑйсӗрех партирен кӑларса арӗслеттермеле тунине илсе кӑтартнӑ. „Курская правда" пӗлтернӗ тӑрӑх, 1937 çулти декабӗрӗн 10-мӗшӗнчех Иванченковӑна айӑпламали пӗтӗм материал вӗрсе хӑпартнӑскер, елеклӗ пулни Курск обкомне паллӑ пулнӑ. Çапла пулин те хӑйӗн тӗрӗс мар, сийенлӗ решенине партин Курск обком бӳровӗ ПСК(б)П Тӗпкомӗн пленумӗ постановлени йышӑниччеех улӑштарма кирлӗ тесе шутламан. Çапла вара, Курск Обкомне йертсе пырӑкансем иккӗмӗш йӑнӑш, тата ытларах пысӑк йӑнӑш тунӑ.

Тӗп Комитет Пленумӗ постановленин уйрӑм пунктӗнче çакна тума хушнӑ:

„Парти райкомӗсене, хула комитечӗсене партине кайала илнисене парти документчӗсене çийӗнчех пама, вӗсене парти ӗçне хутшӑнтарма тата пуçламӗш парторганизацин мӗн пур членӗсене—ПСК(б) Парти ретне кайала илнисене болљшевикла воспитани парассишӗн вӗсем ответлӑ пулни çинчен ӑнлантарса пама хушас".

Партирен тӗрӗс мар кӑларнӑ, елекленнӗ коммунисӑн хӑйӗн парти çемйине кайала парти организацин пӗртан правалӑ членӗ пулса тавӑрӑнмала. Час-часах çапла пулать: партирен тӗрӗс мар кӑларса пӑрахнӑ йулташа кайала тепӗр хут партине тавӑрсан, ӑна йатлама пӑхаççӗ. Партирен кӑларнӑшӑн вӑл хӑйех айӑплӑ пулать вара!

Партин нумай организацисенче тӗрӗс мар, сийенлӗ практикӑ пулса тӑнӑ: ПСК(б)П ретӗнчен кӑларнисене çийӗнчех ӗçрен те кӑларнӑ. ПСК(б)П Тӗпкомӗн пленумӗ партирен кӑларнисем çине çапла пӑхнине хытӑ сивлерӗ.

Тӗрӗс мар кӑларнӑ, кайран партинчех хӑварнӑ коммуниста ӗç памасни икӗ хут айӑплӑ ӗç.

Парти хӑйӗн ретне вӑртӑн тата куçа кӗретӗн тӑшмансенчен, вӗсене пулӑшакансенчен тасатрӗ, малашне те тасатать. Анчах та çак тасатулӑ ӗçе партирен кӑларнипе палӑрса, аслӑрах ӗçе куçма хӑтланакан, çапла тунипе сыхӑлӑ коммунис пулнӑ пек кӑтартма тӑрӑшакан шкурниксемпе карйериссем йерсе кайнӑ. Шкурниксемпе, карйериссемпе пӗрле алла-аллӑн тытӑнса маскӑ тӑхӑннӑ тӑшмансем ӗçленӗ, вӗсем сыхӑлӑх çинчен кӑшкӑрса нимӗн айӑпсӑр çынсенех партирен кӑларма хӗтӗртнӗ, хӑйсен хӳрисене шӑлса лартнӑ, кӑтартулӑ, фалљшивӑй сыхӑлӑхпа хӑйсен айӑплӑ ӗçӗсене витсе пынӑ.

Тӗп Комитет пленумӗ парти организацисене парти членӗсем çинчен елек сарса айӑпа кӗнӗ çынсене çирӗп ответ тыттарма хушрӗ. Тӳрӗ ӗçлекен коммунис çинчен нимӗн сӑлтавсӑр суйнишӗн, ӑна нимӗнсӗр айӑпланишӗн елекçӗ пысӑк ответ тытать. Ӑна партирен кӑларасси тата суда парса ответ тыттарасси таранах айӑпламала.

Чейерех карйериссемпе касканӗсем елек сарма хаçатсемпе те усӑ курнӑ. Нимӗн айӑпсӑр çынсем çинчен хаçатсем урлӑ елек сарни сахал пулман. Суйса елеклесе пӗтернӗ тӑрӑх коммуниста партирен тӗрӗс мар кӑларсанах, ун çинчен хаçатра нимӗн ответсӑрлӑхпа йатлаçса, вӑрçса тӑкнӑ.

Çапла, тӗслӗхрен, „Волокамский колхозник" хаçат педучилищӗ директорне, Белов йулташа нимӗн сӑлтавсӑрах „троцкисла-бухаринла сӳп-çап" тесе йат панӑ. Халӗ палӑртнӑ, ку суйа, елек пулнӑ. Анчах „Волокамский колхозник" редакци хӑй çырни тӗрӗс пулманни çинчен çырса кӑларма шутласа та пӑхман.

Хаçат редакторӗсен, парти организацисен руководителӗсем пекех, тунӑ йӑнӑша тӳрлетни авторитета пӗчӗклетме мар, йӑлтах урӑхла, авторитета çӗкленине асра тытмала, мӗншӗн тесен йӑнӑшсене тӗрӗс йышӑнни болљшевикла самокритикӑн принципӗсене ӑнланса илнине пӗлтерет. Çынна тӗрӗс мар, çӑмӑл шухӑшлӑ, йе хаçатра йӑнӑш елеклесе çырнӑ пулсан, çавӑн пекех пурне те илтмеле, çын айӑплӑ мар тесе çырса пӗлтермеле.

Пур çӗрте те, пур чухне те политикӑлӑ сыхӑ тӑмала—акӑ çакӑ ӗнтӗ болљшевикла парти организацисен пур членӗсене те хушакан тӗп ӗç. Çапла, „çакна ӑнланса илме тахçанах вӑхӑт ӗнтӗ: болљшевикла сыхӑлӑхӑн ӑшчикӗ вӑл—тӑшман темле чейеленсен те, темӗнле пӑркалансан та, темле тумпа витӗнсен те ӑна тӑрӑ шыв çине кӑларма пӗлнинче пулать, ал айне пулакансене пурне те нимӗн уйаса тӑмасӑр, йе „кирек мӗн пулассинчен шикленсе" партирен вуншар, çӗршер çын кӑларса пӑрахассинче мар" (ПСК(б) Тӗпкомӗн Пленумӗ йышӑнӑнинчен).

Тунӑ йӑнӑшсене хӑвӑрт тӳрлетни, партирен тӗрӗс мар кӑларнисене кайалах парти ретне илесси—чӑн-чӑн тӑшмансене хирӗç пит те хайаррӑн, нимӗн хӗрхенмесӗр кӗрешнипе сыхӑнса пымала.

Партин Сталинла Тӗп Комитечӗн йанварти пленумӗн постановленийӗ кашни болљшевика çакна тума хушать.

(„Правда").

Хӗрлӗ Çарпа Тинӗс-Çар Флочӗ 20 çул тултарнӑ йубилейе хатӗрленеççӗ

ДНЕПРОПЕТРОВСК, йанварӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Днепропетровскри Хӗрлӗ Çар „сурчӗ Хӗрлӗ Çарпа Тинӗс-çар Флочӗн йубилейӗ тӗлне илемлӗн йеркеленӗ виçӗ пысӑк выставкӑ хатӗрлет. Выставкӑсем çакнашкал темӑсемпе пулаççӗ: „Граждӑн вӑрçин историйӗ", „ССР Союзӗнче социализм çӗнтерни тата çӗршывӑн оборонӑ тӗрекне çирӗплетни", „Фашиссем пысӑк вӑрçа хатӗрленни". Çакӑнтах художниксен тата красноармейец скулљпторсен выставкине тӑваççӗ.

Днепропетровскри гарнизон чаçӗсенче красноармейецла художествӑлӑ пултарулӑх олимпиадине вирлӗн хатӗрленеççӗ. Олимпиадӑра 400 исполнител хутшӑнмала. Н-ск чаçри красноармейецсен джазӗ олимпиадӑра выљаса пама „Комсомолия" йатлӑ литературӑлӑ-музыкӑлӑ пысӑк монтаж вӗренет.

Днепропетровскри театрсен коллективӗсем Хӗрлӗ Çарпа Тинӗс-Çар Флочӗ 20 çул тултарнӑ тӗле искусствӑ работникӗсен гарнизон бойецӗсене рапорт памали пысӑк вечер хатӗрлеççӗ.

Сталинск чукунçул çинчи Осоавиахим организацисем пӑшал перес тӗлӗшпе заочнӑй ӑмӑртусем туса ирттереççӗ. Вӑл ӑмӑртусенче 1.500 ворошиловла стрелок тата стрелковӑй спортӑн 250 маçтӑрӗ хутшӑнмала.

Совет Союзӗн Геройӗсем—Громов, Йумашев, Данилин йулташсем тунӑ рекордсене çирӗплетнӗ

Мускав, 26 І. Совет Союзӗн Геройӗ М. М. Громов йулташ йанӑчӗпе Парижрен, Совет Союзӗн Геройӗ И. Т. Спирин йулташран (вӑл Пӗтӗм Тӗнчери Авиаци федераци Совечӗн пленумӗнче пулнӑ) çакӑн пек телеграмма килнӗ.

„Пайан Пӗтӗм Тӗнчери Авиаци федераци Совечӗн пленумӗнче ӗçсӗр тӳрӗ çулпа инçе вӗçсе тата çавӑрӑнса çӳресе инçе вӗçсе тунӑ рекордсене татӑклӑн çирӗплетрӗç. Унсӑр пуçне, федерацин Тӗп Совечӗ сире хӑвӑра медаљ памала турӗ. Пӗтӗм кӑмӑлтан саламласа, хамӑрӑн пит ыра тӑван çӗршывӑн малашне те çакӑн пекех чаплӑ çӗнтерӳсем тума ыра сунатӑп. Спирин."

(ТАСС).

ССР Союзӗн орденӗсене пани

Йанварӗн 27-мӗшӗнче ССР Союзӗн Аслӑ Совет Президиумӗн Председателӗ М. И. Калинин йулташ, Президиумӑн чылай членӗсем хутшӑннипе, Шалти ӗçсен Халӑх Комиссариачӗн наградӑланӑ работникӗсене тата ыттисене те орденсем панӑ.

Наградӑланисем хушшинче—совет халӑхӗ суйласа йанисем, ССР Союзӗн Аслӑ Совет депутачӗсем çирӗм çын ытла: Б. Д. Берман, К. Н. Валухин, Д. М. Дмитрийев, И. Ф. Кривец, Г. А. Лупекин, А. И. Успенский, Н. Н. Федоров, П. В. Чистков, П. С. Долгопйатов, В. П. Журавлев тата ыттисем те.

Калинин йулташ тӑван çӗршывӑн мухтавлӑ ывӑлӗсене, хӑйулӑ та шиксӗр разведчиксене, совет халӑхӗн лӑпкӑлӑхне тата мирлӗ ӗçне вичкӗн сыхлакансене ӑшшӑн сывлӑх сунса, вӗсене кашнине рабочисемпе хресченсен правителствин аслӑ наградине панӑ. Наградӑна йышӑнса, чекиссем хӗрӳлӗн тав тунӑ, вӗсене совет халӑхӗ, парти тата правителствӑ пысӑккӑн шашни çинчен каланӑ тата çавӑн пек шаннине ӗçре тӳрре кӑларас тесе вӑйа шеллемесӗр ӗçлеме сӑмах панӑ.

К. Н. Валухин йулташ хӑйӗн сӑмахӗнче Шалти ӗçсен Халӑх Комиссариачӗн оргӑнӗсем халӑхӑн чи ирсӗр тӑшманӗсене—фашисла разведкӑн троцкисла-бухаринла тата ытти агенчӗсене çӗмӗрсе тӑкас ӗçре тунӑ çитӗнӳсене паллӑ тӑвать. Тӑшман йӑвисене социализм çӗршывӗн шанчӑклӑ ывӑлӗ, сталинла паттӑр Нарком Н. И. Йежов йулташ йертсе пынипе çӗмӗрсе тӑкнӑ.

Капиталисӑмлӑ йӗри-тавралӑх çинчен, вӑл пирӗн пата террориссем, шпионсем, диверсантсем йарса тӑни тата малашне те йарса тӑрасси çинчен Сталин йулташ кӑтартса панине, — тет Валухин йулташ,—епӗр астӑватпӑр. Шалти ӗçсен Халӑх Комиссариачӗн оргӑнӗсем халӑх умӗнче мӗнле пысӑкран та пысӑк ответлӑхра пулнине епӗр ӑнланатпӑр. Çав ответлӑха пӗтӗмӗшпех ӑнланса, епӗр хамӑр сыхӑлӑха тата ытларах ӳстеретпӗр тата троцкисла-бухаринла бандитсене, социалисӑмлӑ тӑван çӗршывӑн мӗн пур тӑшманӗсене вӗçне çитиччепех тӗпӗ-тымарӗпех тӗпӗлтаратпӑр, тесе шантаратпӑр.

Чекиссем Валухин йулташ сӑмахне шавлӑн алӑ çупса саламланӑ.

Унтан М. И. Ненахов йулташ тата М. П. Сотин йулташ тухса сӑмах каланӑ.

Орденсем парса, М. И. Калинин йулташ наградӑланисене хӑйсен ӗçӗнче малашне те çитӗнӳсем тума суннӑ.

(ТАСС).

★ ★ ★

„Мурманец" ванчӑк пӑрсем патӗнче

„МУРМАНЕЦ" БОРЧӖ, йанварӗн 26 мӗш. (ТАСС-ӑн йатарласа кайнӑ корреспонденчӗ). Ванчӑк пӑр тӗпренчӗкӗсем патенче, папанинецсен лагерӗнчен 85 милре ишсе пыратпӑр. Пирӗн координатсем пайан 12 сехетре—çурçӗр широтин 75 градусӗпе 30 минутинче тата хӗвеланӑç долготин 8 градусӗпе 30 минутинче.

Çурçӗр-хӗвелтухӑç йенчен 5 баллӑ çил вӗрет. Температурӑ—16 градус сивӗ.

Совет Союзӗ тӑрӑх

** Тула деповӗнчи паровозниксем „ФД" паровоза йакатас ӗçре пысӑк çитӗнӳсем тунӑ. Йакатакан цех коллективӗ йанварӗн 24-мӗшӗнче „ФД" паровоза 5 сехет те 40 минут хушшинче йакатса кӑларнӑ (нормӑ—96 сехет).

** Сталинград облаçӗнчи Камышин районӗ 200 çул хушши ӗнтӗ хӑйӗн арбузӗсемпе палӑрса тӑрать. Кун пек тутлӑ арбузсем урӑх ниçта та çук темеле. Иртнӗ çулта районта 1.500 гектар çине арбуз лартнӑ пулнӑ. Уйрӑм колхозсем гектартан 12—15 тоннӑ арбуз туса илсе пысӑк тупӑш курнӑ. Уйрӑм арбузсене йӗри-тавра виççӗн пӗр метра çитет. Кӑçал районра арбуза ытларах акма палӑртнӑ. Çакна валљли колхозсем районри хӑйарлӑ çӑмӑл тӑпралӑ çӗнӗ çӗрсемпе усӑ кураççӗ. (ТАСС).

Абиссинири çапӑçусем

Абиссинин Лондонри дипломатилӗ миççийӗ—Абиссинире çурçӗр йенче тата çурçӗр-хӗвеланӑç йенче вӑйлӑ çапӑçусем пыраççӗ, тесе пӗлтернӗ.

Йулашки икӗ уйӑх хушшинче абиссинецсене хирӗç çапӑçнӑ чухне италљйанецсен 16 офицер тата 5.993 салтак вилнӗ. Тата италљйанецсен икӗ баталљйонӗ пӑрахса тарнӑ. Çак вӑхӑт хушшинче абиссинецсем 43 грузовик, хӗçпӑшалсем те чылай турттса илнӗ.

Нумай пулмасть Дебра Маркосра италљйанецсен 18 офицерне вӗлернӗ. Çавӑншӑн тавӑрас тесе, италљйанецсен 30 йе 40 самољочӗ Дебра Маркос çине, Годжам провинцин ытти центрӗсем çине кашни кулленех те бомбӑсем пӑрахаççӗ.

Абиссинин Лондонри дипломатилӗ миççийӗ çирӗплетсех каланӑ тӑрӑх, Абиссинири нумай районсенче абиссинецсем хӑйсем хуçа пулса тӑраççӗ.

(ТАСС).

Италири фашисӑма хирӗçле йухӑм

ВЕНӐ, 25. (ТАСС). Женевӑра тухакан „Травай" йатлӑ хаçат „Италири фашисла режима хирӗçле хум" йатлӑ статйа пичетленӗ. Çав Италирен илнӗ пӗлтерӳ тӑрӑх, йулашки вӑхӑтра Италире фашисла режимпа килӗшменнине кӑтартакан демонстрацисем пула-пула иртнӗ. Бергамо районӗнчи пӗр йал çамракӗсен ушканӗ фашисла парти комитечӗн çӗнӗ çуртне чаплӑн уçас умӗн, вӑл çуртӑн чӳречисене йӑлтах ватса тӑкнӑ. Айӑплисене тупайман.

Рим хулинчи пӗр кинотеатрта кино кӑтартнӑ чух балкон çинчен фашисӑма хирӗçле листовкӑсем пӑрахнӑ. Листовкӑсенче: „Тӗп пултӑр фашисӑм! Муссолини режимӗ вӑл—Италишӗн намӑсла йапала!",—тесе çырнӑ. Полици 30 çынна арӗсленӗ. „Çак икӗ тӗслӗх,—тесе çырать „Травай",—пӗтӗм халӑх фашисӑма хирӗç тӑвакан демонстрацисен хумӗ ӳснине уççӑн палӑртса тӑраççӗ".

1938 çулхи йалхуçалӑх ӗçӗсен государствӑ планӗ çинчен

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ йышӑннӑ

постановлени

Колхозсемпе совхозсен хуçалӑхне малала хӑпартса пырас тата вӗсен организацилӗхне лайӑхлатса пырас тесе, ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ йалхуçалӑхӗнчи тӗп ӗçсен планне пӗтӗм çулталӑклӑха, çуркуннехипе кӗркуннехи ӗçсене те кӗртсе, тума йышӑннӑ. Йалхуçалӑхӗнчи 1938 çулхи тӗп ӗçсен планне республикӑсемпе крайсем тата облаçсем тӑрӑх çирӗплетнӗ.

Çирӗплетнӗ план тӑрӑх çак ӗçсене тумала:

а) Çураки планӗ—90 804,9 пин гектар акмала, вӑл шутран: совхозсенче 7.508,7 пин гектар, колхозсенче 77 308,6 пин гектар, йединоличниксен хуçалӑхӗсенче 703,8 пин гектар;

б) Таса çӗртме тумали план—32.641,7 пин гектар сухаламала, вӑл шутран: совхозсенче 3.123,2 пин гектар, колхозсенче 29.518,5 пин гектар;

в) Тӗштырӑсене кӗркунне акса хӑвармали план—36.481,0 пин гектар акмала, вӑл шутран:—совхозсенче 2.087,0 пин гектар, колхозсенче 34.181,5 пин гектар, йединоличниксен хуçалӑхӗсенче 212,5 пин гектар;

г) Кӗрхи çӗртме тумали план—67.907,9 пин гектар сухаламала, вӑл шутран: совхозсенче 6.357,9 пин гектар, колхозсенче 61.550,0 пин гектар;

д) Колхозсенче вӑрлӑхлӑх љуцернӑ сарлака ретлӗн акмала—135 пин гектар, клевер вӑрлӑхлӑх хӑвармала—150 пин гектар тата колхозсенче улӑх-кӗтӳ выранӗсенчи куракӑсене вӑрлӑхлӑх акмала—58,4 пин гектар,—вӑрлӑхлӑх акмалисене суйласа илнӗ, выранти чи лайӑх суртлӑ вӑрлӑхсемпе, чи лайӑх, çемӗçтернӗ тата çумкуракӗсенчен таса çӗосем çине акмала;

е) Совхозсемпе колхозсенче нумай çул ӳсекен куракӑсене вӑрлӑхлӑх 1.799,5 пин гектар хӑвармала тата пӗр çул ӳсекен куракӑсене—158,4 пин гектар хӑвармала.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ССР Союзӗн Çӗрӗç Халӑх Комиссариатне, ССР Союзӗн Совхозсен Халӑх Комиссариатне, ССР Союзӗн Апат-Çимӗç промышленнӑçӗн Халӑх Комиссариатне, союзлӑ республикӑсен Халӑх Комиссарӗсен Совечӗсене, крайсемпе облаçсен ӗçтӑвакан комитечӗсене, кашни республикӑ, край тата облаç валљли тунӑ план тӑрӑх, 1938 çулхи февралӗн 15-мӗшӗнчен кайа йулмасӑр, совхозсемпе колхозсене йалхуçалӑх ӗçӗсен планне çитерсе пама хушнӑ. Совхозсемпе колхозсене йалхуçалӑх ӗçӗсен планне çитерсе панӑ чухне кашни совхозӑн тата колхозӑн уйрӑмлӑхӗсене тӗплӗн хисепе илмеле. Çавӑн пекех тата 1938 çулхи февралӗн 15-мӗшӗнчен кайа йулмасӑр кашни йединоличник хуçалӑхне йалхуçалӑх ӗçӗсем тӗлӗшпе заданисем çитерсе памала.

„Ӗççыннисен пит пысӑк массисен интересӗсене таччӑнах пырса тивекен çакӑн пек пит паха ӗçе тунӑ чухне,—плана колхозсене çитерсе парасси çавӑн пек ӗç пулса тӑрать,—ниме пӑхмасӑр администрациленни, колхозниксен сӗнӗвӗсемпе кӑтартӑвӗсене тата ыйтӑвӗсене шута хуманни ан пултӑр. Райӗçтӑвком президиумӗсен ларӑвӗсенче плансене çирӗплетнӗ чухне колхозсен председателӗсем, вӗсен планӗсене çирӗплетеççӗ пулсан, обйазателљнӑ пулмала. Çаксем çине уйрӑмӑнах çавӑрӑнса пӑхмала.

ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ çакӑн пек тунӑ—колхозсен государствӑн ака планӗ тӑрӑх кӗрхи тата çурхи тӗштырӑсем акнӑ пӗтӗм лаптӑкран государствӑна обйазателљнӑ йӗркепе тырӑ тӑратмала. Кӗрхи тата çурхи ака планӗнчен иртгерсе тӗштырӑ кулљтурисем акнӑ лаптӑкран государствӑна обйазателљнӑ йӗркепе тырӑ тӑратмаççӗ. Анчах, тӗштырӑ кулљтурисене планран иртгерсе акни ытти кулљтурӑсене акмали плана тултарман шутран пулнӑ пулсан, вара акнӑ пӗтӗм лаптӑкран государствӑна тырӑ тӑратмала.

Йединоличник хуçалӑхӗсен обйазателљнӑ йӗркепе государствӑна тырӑ тӑратмалине тӗштырӑсем акнӑ пӗтӗм лаптӑкран, анчах государствӑ планӗ тӑрӑх кӑтартса панинчен сахал мар лаптӑкран, шутлаççӗ.

Халиччен акман пулнӑ çӗрсене ӗçлесе, çавӑнта 1938 çулта тырӑ акакан колхозсене, çав çӗрсем çине акнинчен государствӑна обйазателљнӑ йӗркепе тырӑ тӑратасран хӑтараççӗ: халиччен акман пулнӑ çӗре тасатнӑ, кӑк кӑклана йе типӗтнӗ пулсан—икӗ çуллӑха, тасатман, кӑк кӑкламан йе типӗтмен пулсан—пӗр çуллӑха.

Союзлӑ тата автономлӑ республикӑсен Халӑх Комиссарӗсен Совечӗсен, крайсемпе облаçсен ӗçтӑвакан комитечӗсен çуракине валљли вӑрлӑх фончӗсем хатӗрлесси—вӑрлӑх хывасси, тасатасси, кирлӗ суртсене суйласа илесси, ахалљ вӑрлӑха суртлӑ вӑрлӑхпа улӑштарасси т. ыт. те—каçарма çук кайа йулса пынине халех пӗтермеле.

Союзлӑ тата автономлӑ республикӑсен Халӑх Комиссарӗсен Совечӗсен, крайсемпе облаçсен ӗçтӑвакан комитечӗсен вӑрлӑхсене тӗплӗн тасатса хатӗрлессине, вӑрлӑхсене лайӑх сыхласа усрассине тата колхозсемпе совхозсем суртлӑ вӑрлӑхсемпе акас плана, ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ 1937 çулхи ийунӗн 29-мӗшӗнче „Перчӗлӗ кулљтурӑсен вӑрлахӗсене лайӑхлатмали ӗçсем çинчен" йышӑннӑ постановлени тӑрӑх, тултарассине пурнӑçа кӗртмеле.

* * *

1938 çулта тырпулсен тухӑçне, уйрӑмах суртлӑ вӑрлӑхсемпе акнипе хӑпартасси, йалхуçалӑхне малала хӑпартас ӗçри чи паха задачӑ пулать. Кӑçалхи çул пӗтӗм йалхуçалӑхӗн продукцине 1937 çулхинчен пысӑкрахӑн хутшӑнтармала.

Çак задачӑна пурнӑçа кӗртме колхозсемпе совхозсен руководителӗсен, колхоз активӗн, пӗтӗм колхозниксен массин, совхозсенчи рабочисен тӑрӑшса, вӑй-хӑват хурса ӗçлемеле.

1938 çулхи йалхуçалӑх ӗçӗсен Чӑваш Республикӗ тӑрӑх тунӑ планне ыранхи номӗрте пичетлесе кӑларатпӑр.

Комбайнпа ӗçлекен çӗнӗ маçтӑрсем

Азербайджан АСС Республикӗнчи Пришибинск машинӑ-тракторлӑ станцинчи стахановец Кутуков йулташ иртнӗ çесонра „Коммунар" комбайнпа 574 гектар пухса илнӗ, 700 килограм горючи перекетленӗ. Астрахань—Базарск МТС-ӗнчи стахановец Чумаков йулташ çав машинӑпах çесонра 663 гектар, тата çав МТС-ри Карев комбайнер—560 гектар пухса илнӗ. Вӗсем иккӗшӗ те горючийе чылай перекетленӗ. Шемахинск МТС-ӗнчи комбайнер Буланов йулташ хӑйӗн комбайнпе 623 гектар таран пухса кӗнӗ.

ССР Союзӗн Çӗрӗç Халӑх Комиссарначӗ Кутукова, Чумакова, Карева тата Буланова—комбайнпа ӗçлекен маçтӑр йатне панӑ.

(ТАСС).

ССР СОЮЗӖН 1-МӖШ СОЗЫВРИ АСЛӐ СОВЕЧӖН ПӖРРЕМӖШ ÇЕССИЙӖ. УКЕРЧӖК ÇИНЧЕ: ССР Союз Аслӑ Совечӗн депутачӗсем (сулахайран сылтӑмалла)—Г. И. ПЕТРОВСКИЙ, Г. М. Димитров, Л. М. Каганович, П. А. Йуркин, А. И. Микойан, В. М. Молотов, В. Йа. Чубарь т. ы. те çессие ларнӑ чухне.

Йа. Халит фото-ӳкерчӗкӗ (Союзфото).

Тракторсене йусас ĕçре кайра пыракансем

Республикăра тракторсене йусас ĕçре йулашки вунă-кунлăхра улшăну пулнă пулин те, чылай машинă-тракторлă станцисем халь те йулса пыраççĕ. Капиталлă ремонт йĕнĕпе йанварĕн 25-мĕшне çулталăк планне республикипе пурĕ 56,9 процент тултарнă пулсан, уйрăм МТС-сем çав вăтам хисепрен нумай кайра пыраççĕ. Вăрмарти МТС хăйĕн планне 37,5 процент, Елĕкри—35,7 процент, Пăрачкаври—48 процент çеç тултарнă.

Вăтам ремонт йенĕпе ĕç татах та начар. Шăхасанти машинă-тракторлă станцисĕр пуçне плана тултарнă МТС урăх çук. Республикипе плана пурĕ 45,1 процент тултарнă пулсан, Пăрачкаври МТС 8 процент, Шупашкар районĕнчи—27 процент, Тутаркасри—34 процент, Патăрйелти—33 процент, Кувакинори—35 процент çеç тултарнă.

Çав МТСтанцисенчен Шупашкар районĕнчи, Елĕкри, Кувакинори тата Çĕрпӳри станцисем тракторпа ĕçлемели плугсене йусас тĕлĕшпе те пит кайра пыраççĕ. Тутаркасрипе Пăрачкаври МТС-сем ку ĕçсене тытăнман та. Плугсене тата трактор сейăлкисене йусас ĕçпе халь Шăхасан, Куславкка, Ишлей тата Тăвай МТСтанцисем çеç малта пыраççĕ. Ытти МТС-сенче çак ĕçе пуринче те вăйлатмала.

МТС руководителĕсен çакна асăрхамала: тракторсене йусамали плана тăвата уйăх хушшинче капиталлă ремонт йенĕпе 56,9 процент, вăтам ремонт йенĕпе 45,1 процент тултарнă пулсан, мартăн 1-мĕшне çитиччен—пĕр уйăх хушшинче пĕтĕм плана тултарса çитерме пĕтĕм вăйа хурса ĕçлеме килет.

„Броневик“ колхоз агроплан тăрăх ĕçлет

ВĂРНАР. Усланăри „Броневик“ колхоз иртнĕ çулхи ӳсĕмсемпе лăпланса ларман. Кăçалхи çуракине иртнĕ çулхинчен те лайăхрах хатĕрленсе кĕтсе илессишĕн кĕрешет. Кăçал кашни гектартан 140 пăтран кайа мар тĕштырă туса илессишĕн бригадăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. 4-мĕш бригадă кашни гектартан вăтам шутпа 150 пăт сĕлĕ туса илме палăртнă. Пайанхи куна колхоз 1790 лав торф, 1635 лав тислĕк уйа кăларнă. Ку ĕçре Федоров Матвей бригади малта пырать. Уйрăмăнах бригадăра А. Йаковлев, Й. Максимов, Ф. Йефимов колхозниксем, Анастасийа Захарова колхозницă хастарлăн ĕçлесе, кулленхи ĕç нормине 200—250 процент тултарса пыраççĕ. Колхоз минераллă çăнăхсене кӳрсе килнĕ. 34 центнер кĕл пухса хатĕрленĕ. Тислĕк пухас тĕлĕшпе кайăк-кĕшĕксем ларнă вырăнсене йатарласах йешчĕксем лартнă.

Хатĕрленĕ имçамсемпе кирлĕ таран усă курас майпа колхоз план туса хатĕрленĕ. План тăрăх çĕрулми лартмали 20 гектар çĕр лаптăкне кĕлпе тата кали тăварĕпе çемçетмеле. Кĕрхи, çурхи тырăсене пĕтĕмĕшпех тислĕк шывĕпе шăварса апат памала. Кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе 16 гектар çинче çурхи тулăна апат памала. Урпа акас вырăна аммиак силитрипе çемçетмеле.

Колхозăн кăçал 160 гектар çине тĕштырă акса хăвармала. Ку çĕре колхоз ретлĕ çейăлкăсемпе 124 гектар, хĕреслесе 16 гектар, сарлака ретпе 20 гектар акать. Акмали вăрлăхсене пĕтĕмĕшпех суртласа пĕтернĕ. 18 центнер урпана пĕрчĕн-пĕрчĕн суртланă. Тĕштырăсене 48 гектар çине йаровизацилесе, çурхи тулăна 16 гектар биопнтизацилесе акать. Кунсăр пуçне, 8 гектар çурхи тулăна мулчировани тăвать.

Йалхуçалăх машинисене пурне те йусаса типĕ çĕре кĕртсе лартнă. Плуг тимĕрĕсене çу сĕрсе хунă. Кӳлмели таврашсем те пĕтĕмĕшпех йусавлă.

Çуракинче колхозăн 70 лаш ĕçлемеле. Лашасене хĕлĕпех улăх ути, 10 шар кĕренкке сĕлĕ параççĕ. Çавăнпа та лашасем мăнтăр çӳреççĕ.

Колхоз вăйлă лашасемпе çуракине 5 кунта акса пĕтерме палăртнă.

Çавăн пекех Хăмăшри „Çамрăк колхозник“ колхоз та çĕре талкешпех çемçетессишĕн кĕрешӳве анлăн сарса йанă. Пайанхи куна колхоз 1844 лав торф, 1836 лав тислĕк уйа кăларнă. 27 центнер кĕл пухса хатĕрленĕ. 130 гектар çине йур тытса хăварнă. Кунсăр пуçне Нурăс больницинчен 30 лав фекали турттарса уйа тăкнă. Бригадăпа бригадă, колхозникпе колхозник хушшинчи социалисăмла ăмăртува анлăн сарса йанă.

Çав вăхăтрах Мачамăшри „Первомайский“ колхоз 1200 лав тислĕк кăларнисĕр пуçне нимĕн те туман. Йалхуçалăх машинисене йусама тытăнман. Вăрлăхсене суртламан. Колхоз председателĕ Мартынов çуракине хатĕрленессишĕн тăрăшмасть.

Ст. Улангай.

Аван ĕçлекен вулав çурчĕ

Хыркаççинчи (Шупашкар р.) вулав çурчĕ уçăлнăранпа культмассăлă ĕç анлăн сарăлса пырать. Вулав çурчĕ çумĕнче тĕрлĕрен кружоксем ĕçлеççĕ. Уйрăмăнах драмкружок аван ĕçлесе пырать. Осипов йулташ йертсе пынипе драмкружок членĕсем кашни ернерех çывăхри йалсене тухса спектакльсем лартаççĕ. Осиповăн „Айдар“ пйесине ханвар уйăхĕнче 6 хут лартнă. Колхозниксемпе колхозницăсем спектакльсене курма пысăк хаваслăхпа пухăнаççĕ.

Драмкружокра пурĕ 33 çын. Вĕсем пурте колхоз çамрăкĕсем.

Вулав çурчĕ çумĕнчех агрокружок та ĕçлет. Кружокра 32 колхозник вĕренет. Тата кăçал 8 çынтан шавлă оркестăр организациленĕ. Вулав çурчĕ 10 тĕслĕ хаçат-журнал çырăнса илет, анчах çĕнĕ кĕнекесем çителĕксĕр-ха.

А. Иванов

„Хĕрлĕ партизан“ колхозра

ЙĔПРЕÇ. Çирĕклĕри „Хĕрлĕ партизан“ колхоз кăçалхи вăйлă тырпулшăн чăннипех те большевикла кĕрешет. Колхоз председателĕ Йефремов (комсомолец, вăлах комсомол комитечĕн секретарĕ) çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçе лайăх организациленĕ.

Колхозăн çĕре çемçетмели вырăнти удобренисене хатĕрлемели, вăрлăхсене суртламали çирĕп план пур. План тăрăх çакăн пек ĕçсем туса иртермеле: уйа 1128 лав тислĕк, 280 тоннă торф кăлармала, фекали 40 центнер, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 25 центнер, кĕл 25 центнер пухмала, 40 центнер фосфорит çăнăхĕ кӳрсе килмеле, 186 гектар çинче йур тытса хăвармала.

Çак плана пурнăçа кĕртсе пыма график тунă. График пурнăçа кĕрсе пырать. Йанварĕн 20-мĕшне уйа тислĕк кăларас ĕçе 156 процент, торф—123 проц., т. ыт. те пурнăçланă.

Таса тата суртлă вăрлăх аксан, тырă тухăçĕ те пысăк пулнине колхозниксем лайăх пĕлеççĕ. Çавăнпа та вĕсем вăрлăха суртласа тасатас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçленĕ. Кăçалхи çуракинче акма 228 центнер сĕлĕ, 87 центнер тулă, т. ыт. культурăсене те çителĕклĕ таран суртласа хунă. Тулă вăрлăхĕ суртлă пулман пирки, ăна Чапайев йачĕпе тăракан колхозри суртла тулăпа улăштарса килнĕ.

Йалхуçалăх машинисене те пĕтĕмпех йусанă.

Çуракине хатĕрленессипе „Хĕрлĕ партизан“ колхоз „Чувашия“ колхозпа ăмăртса ĕçлет. Ăмăрту договорĕ тăрăх, вĕсем çуракине февралĕн 1-мĕшне пĕтĕмпех хатĕрленсе çитме палăртнă. Ăмăрту договорĕ мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине пĕлес майпа йанварĕн 25-мĕшĕнче пĕр-пĕрин хушшинче тĕрĕслӳ туса иртернĕ.

Çуракине хатĕрленес ĕçре хăшпĕр колхозниксем стахановла ĕçĕн тĕслĕхне кăтартаççĕ. 1-мĕш бригадăри Кириллов Михаил тăрăшса ĕçлет.

Çавăн пекех Богданова Перасковйа хăйĕн 18 çулхи хĕрĕпе—Ульйанапа тислĕк, торф турттарнă çĕрте лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем пĕр кун сиктермесĕр ĕçе тухаççĕ.

Çуракине хатĕрленес ĕçре çитменлĕхсем те пур. Колхозниксем агротехникăна лайăх пĕлсе тăма кружок организацилеме ыйтаççĕ. Анчах агрокружок организацилемен. Ку ĕçе вулав çурт пуçлăхĕн Иванов йулташăн пуçарса йамала пулнă. Анчах вăл агрокружок ĕçĕ çинчен манса кайнă.

Тепĕр çитменлĕх вăл—бригадăпа бригадă, звенопа звено, колхозникпе колхозник хушшинче социалисăмлă ăмăрту договорĕ тумани. Çуракине большевикла хатĕрленсе, кăçалхи çул вăйлă тырпул туса илес тесен, социалисăмлă ăмăртупа стахановла йухăм тĕп вырăнта пулмала.

Дм. Михайлов.

Республикăри мухтав хăми çинче пулма тивĕç илессишĕн

ШĂХАСАН. Атнашри Киров йачĕпе тăракан колхоз членĕсем 1938 çулхи большевикла çуракине хастарлăн хатĕрленсе нихăçан пулман вăйлă тырпул туса илессипе республикăри пур колхозсенчи колхозниксемпе колхозницăсене хăйсем пек ĕçлеме социалисăмла ăмăртăва чĕнчĕç.

Вĕсем йанварĕн 10-мĕшнех 4041 лав тислĕк, 4636 лав торф уйа кăларнă. 112 центнер кĕл, 230 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, фекали 1108 центнер пухса хатĕрленĕ. Вăрнартан фосфорит çăнăхĕ 8 тоннă кӳрсе килнĕ. 321 гектар çинче йур тытнă.

Колхозниксем çак ĕçсене тунипе лăпланса ларман.

— Ĕпĕр республикăри колхозниксемпе колхозницăсене чĕнсе каланă чухне хамăр çине илнĕ обйазательствăна сăмахпа мар, ĕçпе пурнăçлатпăр,—теççĕ вĕсем.

Колхоз пайанхи куна 7532 лав тислĕк, 6121 лав торф уйа кăларса купаласа лартнă. Кунсăр пуçне 152 центнер кĕл тата ытти тĕрлĕрен имçамсене те нумай пухса хатĕрленĕ. Йалхуçалăх машинисене пĕтĕмпех йусаса çитернĕ. Акмали вăрлăхсене суртланă, халĕ татах алăпа суйлас ĕçе тытăннă. Çураки вăхăтĕнче лашасене çитерме апат çителĕклĕ таран уйăрса хурса, конюхсене актăпа çирĕплетсе панă. Кӳлмели таврашсем те йусавлă.

Колхозра пурĕ 8 бригадă. 5 бригадăн бригадирĕсем—комсомолецсем.

Г. Исайев.

Колхозри театр

„Тивĕш“ колхозра (Ишлей р.) Комсомолецсем тăрăшнипе иртнĕ çулта колхоз театрĕ организациленĕ. Театрăн малтанхи ĕçĕсем çителĕклех пулман. Спектакльсем те сайра хутра çеç пулкаланă. Кăçал ку ĕçре Александров комсомолец тăрăшнипе театр ĕçри пахалăха чылай хăпартрĕ. Халĕ 10 кунра пĕрре спектакль лартса параççĕ. Спектакль курма колхозниксем нумайăн çӳреççĕ. Йанварĕн 13-мĕшĕнче, А. Кăлкан çырнă „Айăп“ йалăх пйесăна лартса панă чух клуба халăх чăп туллийех пухăнчĕ. „Тивĕш“ колхоз театрĕ çывăхри йалсене те тухса спектакльсем лартса парать.

Л. Петров.

Радио лартрĕ

Изедеркă (Елĕк р.) йалĕнчи И. Ларьков колхозник хăйĕн килне радио лартрĕ. Халь кӳршĕ çыннисем кашни каçах ун патне радио итлеме пыраççĕ.

И. Кутузов.

Агитаторсене ĕçре пулăшса пымала

ССР Сойуз Аслă Совет суйлавне хатĕрленсе иртерессипе Шăмăршă районĕнче 24 суйлав участки организациленĕччĕ. Çак участкăсенче 225 агитатор ĕçлерĕç. Агитаторсем хăйсене шанса панă хисеплĕ те ответлă ĕçе пĕтĕм тимлĕхпе хастарлăн туса пычĕç.

ССР Сойуз Аслă Совет суйлавне хатĕрленсе иртерес тĕлĕшпе тунă ĕç питĕ пысăк опыт пачĕ. Çак опыт малашне те халăх хушшинче политикăлла агитаци ĕçне организацилес çĕрте пулăшмала.

Шăмăршă районĕнче политикăлла агитаци, уйрăмах, 1937 çулта анлăн сарăлса кайрĕ. Суйлав саккунне вĕренмели кружоксенче 18 çул тултарнă çамрăксенчен тытăнса, 60—70 çулса çитнĕ ватă çынсем вĕренчĕç. (Тĕрлĕ сăлтавпа пыма пултарайман çынсем патне килĕсене кайса ăнлантарнă). Суйлавçăсем пурте пысăк активлăхпа тăрăшса вĕренчĕç.

Кружоксенче тĕнчери лару-тăру çинчен, уйрăмăнах—фашиссен Испанипе Китайри тискер ĕçĕсем çинчен ăнлантарса панă. Çавсемпе пĕрлех Российăри ĕçхалăхĕ 1917 çулхи Октябĕр революцийĕччен, патша вăхăтĕнче мĕнле хĕнхурпа курса пурăнни çинчен калаçу иртернĕ.

Заньатисенче ĕçхалăхĕ патша вăхăтĕнче правасăр, пĕр хисепсĕр, хĕн-хур курса пурăнни çинчен ваттисем тăрăха-тăрăха каласа параççĕ. Çамрăксем шăппăн та тимлĕн итлеççĕ. Тĕплĕнрех ăнланас тесе ыйта-ыйта пĕлеççĕ.

Кружока вĕренме пуçтарăннă çынсем пурте—пирĕн тăван çĕршывра коммуниссен партийĕ, халăхсен çулпуçĕ аслă Сталин халăха телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса пани çинчен хавасланса калаççĕ.

Çапла вырăнĕнчи конкретлă фактсемпе кăтартса ăнлантарса пани кружокра вĕренекенсемшĕн питĕ усăлă, ăнланмала пулса тăрать, политикăлла агитацине çӳлĕ вырăна хăпартать. Агитацине вырăнти примерсемпе çыхăнтарнă чухне, паллах ĕнтĕ, заньатисем те питĕ активлăн иртеççĕ. Çакăн пек иртернĕ заньатисем вĕренекенсене питĕ пысăк уса пачĕç, вĕсенчен нумайĕшĕ хăйсем те агитаторсем пулса тăчĕç. ССР Сойузĕн Советне суйлас умĕн Шăмăршă районĕнче 225 агитатор кăна мар, вĕсен шучĕ 2—3 хут ытла ӳссе кайрĕ. Ку калама çук пысăк вăй. Шăмăршă районĕн çак вăйа ĕçе йарса, халăх хушшинчи политикăлла агитацине кăçал та, 1937 çулти пек организацилемеле.

ПСК(б)Партин Шăмăршă районĕнчи организацийĕ умĕнче халĕхи вăхăтра тăракан тĕп задачă вăл—малашне те çак агитаторсен хушшинче ĕçлеве, вĕсене организацилесе пырасси. Пĕр агитатора та çухатмала мар, вĕсене вĕрентсе тата лайăхрах ĕçлеме пулăшса пымала.

Большевиксен сăмахĕпе ĕçĕ пĕр-пĕринчен уйăрăлса тăмаççĕ, çавăн пекех политикăлла агитаци те практикăлла ĕçрен уйрăлса тăма пултараймасть. Политикăлла агитаци халăха большевикла воспитани памала. Клас тăшманĕсене—троцкисла-бухаринла шпионсене, сăтăрçăсене, диверсантсене тăрă шыв çине кăларса, вĕсене тĕпĕ тымарĕпех кăкласа пăрахма халăха организацилемеле.

Халь акă çуракине хатĕрленес ĕçре социалисăмла ăмăрту сарăлса пырать. Агитаторсем хăйсем çак ăмăртура малти ретре пулса, пример кăтартса пымала. Мĕнпур колхозниксене хăйсем пекех лайăх ĕçлеме, çуракине тивĕçлипе хатĕрленсе, сталинла вăйлă тырпулшăн паттăрăн кĕрешме организацилемеле.

Анчах халĕхи вăхăтра агитаторсемпе ĕçлесси лайăх тăрать тесе калама çук-ха, мĕншĕн тесен нумай агитаторсем ĕçлемеççĕ.

Большевиксем тунă çитĕнӳсемпе нихçан та лăпланса ларма пултараймаççĕ. Пуçланă ĕçе аталантарса, ӳстерсе пыни кирлĕ. Агитаторсене кулленхи ĕçре пулăшса пымала.

Н. Косойкин.

Уй-хир çекцисен ĕçне вăйлатмала

ТĂВАЙ Йанварĕн 27-мĕшĕ (телефон тăрăх хамăр корр.) Йеншик Нăрваш йалсоветĕ çуракине хатĕрленес ĕçе колхоз председателĕсенчен отчотсем итленипе пуçланă. Йанварĕн 11-мĕшĕнче „Красная Чувашия“ колхоз правлени отчотне итленĕ. Ун хыççăн çуракине хатĕрленес йенĕпе кирлĕ ĕçсем тума колхоз правленинче ыйту лартнă. Ку ыйтува колхоз активĕн пуххувĕнче те сӳтсе йавнă.

Унтанпа „Красная Чувашия“ колхоз çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе агротехникăлла ĕçсене пурнăçлама тытăнчĕ: 1788 лав торф, 4 пин лав тислĕк уйа кăларчĕ, 70 лав фекали, 20 лав кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ. Анчах вăрлăха суртлă вăрлăхпа улăштарма васкамаççĕ, татах 360 центнер улăштармала. Йалхуçалăх машинисене те йусаса пĕтермен-ха.

Çуракине хатĕрленессипе йалсовет çумĕнчи уй-хир секцийĕн пысăк вырăн йышăнмала. Анчах вăл хăйĕн вырăнне йышăнайман-ха. Уй хир секцийĕнче пурĕ 13 çын, вĕсенчен йалсовет членĕсем 6 çын. Вĕсен организацилĕхĕ сахал. Секцин план çук. Çакна пула секци членĕсем мĕн тумалине те пĕлмеççĕ.

Колхозра 14 бригадă, вĕсенче пĕр бригадинче те çуракине хатĕрленессипе социалисăмла ăмăрту пуçарса йаман. Колхоз правленийĕнчен уй хир стахановецсемпе çыхăнса ĕçлени палăрмасть. Хăйсем каланă тăрăх, колхозри 9-мĕш бригадă организацилĕхе аван кăтартать. Уйа торф, тислĕк кăларассипе вăл бригадă чи лайăххисенчен пĕри шутланать. Ытти бригадăсенче çавăн пек колхозниксене ĕçе йавăçтарма пĕлни сахал. Колхозра 30 çынтан агрокружок организациленĕ, анчах заньатисем йĕркелĕ пулса пымаççĕ, активлăх çук.

Йеншик Нăрваш йалсоветĕн колхозсене çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ытларах пулăшмала.

Ив. Моçейев.

Вĕренӳре йулса пынине пĕтерер

Учителсен кашни канашлăвĕнчех епĕр. ПСК(б)П Тĕпкомĕпе ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Вĕрентӳ программисемпе пуçламĕш тата вăтам шкулсенчи йĕркесем çинчен“ 1932 çулхи августăн 25-мĕшĕнче йышăннă постановленине аса илетпĕр. Унта вĕренӳ ĕçне кăтартулăн, йĕркелĕ мелли майсене, кашни уйрăм предмет тăрăх хăйне май ексекурсисем, опытсем, практикăлла ĕçсем тата сăнавсем туса иртермеллине татăклăн кăтартса панă.

Çак паха кăтартусене пур учителсем те пĕр пек çине тăрса пурнăçа кĕртсе пыраççĕ тесе калама пултаратпăр-и епĕр? Çук. Партийне правителствăн кăтартăвĕсене пур учителсем те çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пынă пулсан, ачасем вĕренӳре кайа йулса пыни çинчен ыйту халĕхи чек сивĕч тăман та пулĕччĕ.

Вĕренӳ çулĕн çурçулхи итогĕсем савăнтармалах мар. Вĕренекенсем кайа йулса пынине кăтартакан процент учителсем хăйсем хак пана тăрăх та нимĕн чухлĕ те чакман. Нумай шкулсем, уйрăмах Шупашкартисем, вĕренӳре йулакан ачасене вĕренӳ çулĕ варринче кĕçĕн класĕсене чылай кусăра-кусăра лартрĕç. Вĕсем çапла май уйрăм класем тăрăх кайа йулакансен процентне чакарма шутларĕç. Анчах вĕренӳ çулĕ варринче кĕçĕнрех класа кусăрса лартнă ачасен категорине никам та шута илмен-ха. Шкулсен отчочĕсенче ку ачасем пĕр класра иккĕмĕш çул ларакансен шутĕнче тămаççĕ. А вĕсем, тĕрĕссине, пĕр класра иккĕмĕш çул ларакансен хисепне кĕмеле.

Уйрăмах вĕренекенсем вырăс чĕлхи, математикă, географи тата чăваш чĕлхи предмечĕсемпе кайа йулса пыраççĕ. Вырăс çырулăхĕпе ĕлкĕрсе пыракансен хисепĕ 9—10-мĕш класĕнче 79.9 процент кăна шутланать.

Мĕнпĕн капла? Мĕншĕн тесен, шкулсенче ачасене çырулăх ĕçне хăйсем тĕллĕн тума хăнăхтарасси çинчен парти Тĕпкомĕ кăтартса панине пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. Çырулăха вĕрентнĕ çĕрте, диктовкăпа грамматикăлла упражненисемсĕр пуçне, урăх нимĕнле кăтартулă маслетпе те усă курма пĕлмеççĕ. Ачасен пултарулăхне çĕклекен çырулăх формисемпе (изложени, сочинени тата ыт. те) уйрăм учителсем кăна усă кураççĕ, вĕсем те пачах çителĕксĕр. Ку çитменлĕхе учителсем: вĕренекенсем хăйсем тĕллĕн пачах çырма пултараймаççĕ, тесе тӳрре кăларасшăн. Анчах ачасене учител вĕрентмесен, вĕсем вĕренме пултарайманни чылайĕшĕсем манаççĕ.

Пултарулăх çырăвĕсем вĕренекенсене питех те интереслентереççĕ, вĕсем фантазийĕпе шухăшĕсене ӳстереççĕ, анчах кашни сăмаха, кашни пуплеве тĕплĕн шухăшласа çырма хушаççĕ, словарпе тата справочникпе усă курма, кирлĕ кĕнекере кирлĕ вырăна тупма вĕрентеççĕ. Çапла май вĕренекенсен пĕлӳлĕхне хăпартма, вĕсен чĕлхине пуйанлатма пулăшаççĕ.

Тĕлĕнтермеле интереслă, паха та пуйан географи предмечĕпе те кайа йулса вĕренекенсем нумай. Ку тата мĕнрен килет? Кунта та çавнашкалах, пĕтĕм ĕç ПСК(б)П Тĕпкомĕ кăтартса панă çитменлĕхсене—„пурнăçран айаьра тăрса вĕрентессине, типпĕн ăнлантарса парассине“ пĕтерменнинчен килет.

Ачасем вĕренӳре кайа йулса пыни типпĕн те кичем вĕрентнинчен килнине тĕслĕхсемпе çирĕплетсе пама пулать. Именкассипе (Трак р.) Елĕк (Елĕк р.), вăтам шкулсенче географице ĕлкĕрсе пынипе кăтартакан хисеп. пĕтĕм республикăри шкулсен результачĕпе танлаштарсан, чылай çӳлте тăрать. Географипе ĕлкĕрсе пырайманнисем пĕтĕм республикĕпе 5-мĕш классем тăрăх 14.7 процент пулсан. Именкасси шкулĕнче—3,4 процент, 6-мĕш классем тăрăх республикĕпе—14,3 процент, Именкасси шкулĕнче—3,9 процент, 7-мĕш классем тăрăх республикĕпе—9,5 процент. Именкасси шкулĕнче—2.2 процент.

Çак шкулсенче географипе вĕрентекен учителсем (Именкассинче — Иванова, Елĕкре—Никитин) вĕрентӳ ĕçне лайăх, кăтартулă йĕркеленĕ. Вĕсем географи урокĕсенче тăван çĕршыври строителствăна, летчиксемпе иследователсен паттăрлăхĕсене кăтартса параççĕ. Вĕсем хĕвелĕн кăнтăрлахи йĕрне тунса, ун тăрăх меридиан хăш йенеле кайнине пĕлес тĕлĕшпе практикăлла ĕçсем йĕркеленĕ. Хăйсем тĕллĕн сăнаса, вĕсем хăйсем пурăнакан вырăнсен широтипе долготине палăртнă. Ачасем Çурçĕрти „Польар станцин“ ĕçĕсене сăнаса тăраççĕ. „Польар станцийĕн“ координачĕсем çинчен калакан пĕлтерӳсене ăнланса вулаççĕ; станци куçса пынă май, ачасем ун çулне картă çинче паллă туса пыраççĕ. Вĕренекенсем кунта градус пайлавĕсене лайăх ăнланса илнĕ, вĕсемпе тĕрĕс усă курма пĕлеççĕ.

Кун пек вĕрентекен учителсем питех те сахал. Трак районĕнчи учителсен канашлăвĕнче, географи урокне лайăх, екскурсисемпе, сăнавсемпе тата практикăлла ĕçсемпе çыхăнтарса йĕркелени çинчен 2 учител çеç каласа пама пултарчĕ. Чылайĕшсем урока мĕнле килчĕ çапла иртереççĕ.

Хăшпĕр учителсен урокĕсенче ачасем тунсăхласа, звонок пуласса çеç кĕтсе лараççĕ. Сăмахран: Йакимоври (Шупашкар р.) туллимар вăтам шкулта вĕрентекен В. Н. Николайев учител географи урокне полушарипе глобус илсе пырать, анчах урокра мĕн пуласси хăй те пĕлмест, глобуспа полушари ахалех тăрса йулаççĕ. Виç-тăватă минут хушши вăл учебник тăрăх хăй вулать. Унтан 3 минут хушши ачасене мĕн вуланисене ăнлантарса парать. Унтан тата малала вулать. Ачасем ку вăхăтра ашкăнаççĕ, анасласа лараççĕ тата ыт. те. Вĕренекенсем градус пайлавĕсемпе усă курма пĕлмеççĕ, вĕсем картă тăрăх Мускав хулин широтипе долготине те кăтартса пама пултараймаççĕ.

Йестествознанипе химине вĕрентес ĕçе те çавнашкалах кичем йĕркеленĕ. 3—4-мĕш классенче йестествознанине учебниксем тăрăх класра вуласа çеç вĕренеççĕ. Урокcене тепĕр хут пăхса тухнă чух та чĕлхе урокĕсенчи пекех, вăхăта кĕнеке вуласа иртереççĕ. Хăшпĕр шкулсенче вĕренекен ачасем учител чĕррĕн калесса пане те нихăçан илтсе курман. Минералсем, металсем, чĕрĕ-чунсем çинчен калаçаççĕ, анчах вĕренекенсем вăл йапаласене куçпа курмаççĕ.

5—10-мĕш классенчи уйрăм учителсем вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче йĕри-таврари çутçанталăкпа сарлакан усă кураççĕ. Сăмахран: Çĕрпӳ районĕнчи Йĕкĕрвар вăтам шкулĕнче ĕçлекен В. А. Смирнов учител йестествознани урокĕсене чĕрĕ, курса вĕренмели йапаласемпе пуйанлатать. Вăл программă кăтартнă тăрăх, вĕрентӳре кирлĕ чĕр-чунсене: шапасене, тĕрлĕрен хурткăпшанкăсене, ӳсен-тăрансене кăркуннех пуçтарса хатĕрлесе хунă. Шкулта „чĕрĕ кĕтес“ организациленĕ. Сăнавсемпе опытсемсĕр пĕр урок та иртмест, ачасен умĕнче кашни партă çинче пайан вĕренмели йапала тăрать.

Анчах çав вăхăтрах тепĕр учителсем çутçанталăкăн пире чи çывăх йапалисемпе те усă курма пĕлмеççĕ. Йакимоври (Шупашкар р.) Деметйева учительницă. ран: „есĕр класра паразит-кăмпасен представителĕсемпе мĕншĕн усă курмастăр?“—тесе ыйтсан, вăл: „вĕренекенсем тыр кăмпипе тырă тутăхнине çулла уйра ĕçленĕ чух хăйсемех лайăх курнă“, тесе ответлерĕ.

Нумай шкулсенче 5-мĕш класра ӳсен-тăрансен вăрлăхĕсем мĕнле шăтса ӳсине сăнас ĕçе йĕркелемен.

Тата та начартарах химии вĕрентес ĕçе йĕркеленĕ. Чылай шкулсенче çак интереслă пуйан предметран, куллен опытсемсĕр, сăнавсемсĕр, типĕлле вĕрентсе пырса, ачасемпĕн кичем те йăвăр предмет туса хунă. Хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне химии сайра шкулсенче çеç йышăннă. Именкасси вăтам шкулĕн директорĕ Александров йулташ Трак районĕнчи учителсен канашлăвĕнче, вĕсен шкулĕнчи ачасем химине чи паха, чи интереслă предмет тесе шутлани çинчен каласа пачĕ. Ку ахаль пулман. Александров йулташ хăй предмечĕн пĕр çĕнĕ темине те опытсемпе сăнавсемсĕр ăнлантарса памасть. Ăна кунта шкулти „химик-любитель“ лабораторийĕ нумай пулăшать. Александров учител химипе класра çеç мар, ачасемпе клас тулашĕнче ĕçленĕ чух та усă курать. Урăхла каласан, вăл хăйĕн ĕçне чĕрĕрен йуратса тăвать.

Çапла урок ăнланмала, интереслă пуласси педагогăн ăсталăхĕнчен, вăл урока тĕрĕс йĕркелеме пĕлнинчен килет. Учителĕн педагогикăлла ăсталăхне, методикăлла пĕлĕвĕсене хăпартасси—пирĕн пайанхи пысăк задачăсенчен пĕри.

Ачасем вĕренӳре ĕлкĕрсе пынине шута илес тĕлĕшпе те партипе правителствă татăклă кăтартусем панă. Учителсем вĕрентӳ ĕçĕнче кашни ачана тимлĕн сăнаса пымала. Çапла сăнаса пырса, преподавател вĕренӳ çулĕн кашни чĕрĕкĕ пĕтнĕ тĕле кашни вĕренекен мĕнле ĕлкĕрсе пынине паллă туса хумала. Çак кăтартусем пурнăçа начар кĕрсе пыраççĕ. Учител вĕренекенĕн пĕлĕвне, вăл мĕнле вĕренсе пынă тăрăх мар, вĕренӳ çулĕн чĕрĕкĕ пĕтнĕ чух ачаран хĕйĕнчен тĕпчесе тин пĕлет. Клас руководителĕсем хăйсен класĕнчи вĕренекенсене пачах та пĕлмеççĕ. Ачасен интересĕсене сăнаса пĕлме тăрăшмаççĕ.

Учителсен хĕлехи канашлăвĕсенче 1937—38 вĕренӳ çулĕ пĕтнĕ тĕле ачасем вĕренӳре кайа йулса пынине тĕпĕпех пĕтермеле тесе йышăнчĕç. Партипе правителствăн татăклă кăтартăвĕсене кашни учител тĕплĕн пурнăçа кĕртсе пырсан, пирĕн шкулсем вĕренӳре чăннипех те лайăх ĕлкĕрсе пыракан пулĕç. Учителĕн кашни урока интереслă, паха та ăста йĕркелеме тăрăшмала, ачасене урокăн практикăлла пахалăхне туйтарса илтермеле. Директорсемпе шкул пуçлăхĕсем партипе правителствăн кăтартăвĕсене пурнăçланă çĕрте учителе куллен пулăшса пымала.

П. Д. Данилов.

X

Партине илес ӗҫе вӑйлатар

Шӑнкӑртам районӗнчи хӑшпӗр парторганизацисенче сочувствуйушчисемпе ӗҫлесси тата парти ретне ҫӗнӗ членсем илесси калама ҫук йапах тӑрать. Пӗр ҫулталӑк иртсе кайрӗ, анчах сочувствуйушчисен ретне кӗме те, сочувствуйушчирен кандидата куҫарма ыйтса та пӗр зайавлени те паман,

Акӑ тӗслӗхшӗн 1-мӗш Шӑнкӑртам йалсоветӗ ҫумӗнчи пуҫламӗш организацинех илер. Ҫак организацире партине илес ӗҫ калама ҫук начар пырать. Ку организацире партине кӗрес текенсем пур, анчах вӗсем рекомендаци тупаймасӑр тӑраҫҫӗ. Парти райкомӗ те партине илес ӗҫе ҫителӗклӗ таран интересленмен, ӗҫлемен.

Парти Шӑнкӑртам райкомӗ ҫак кунсенче 1-мӗш Шӑнкӑртам йалсоветӗ ҫумӗнчи пуҫламӗш организаци парторгӗ Вахитов йулташӑн отчотне итлерӗ. Вӑл тӳрех:—„епӗр сочувствуйушчисем хушшинче ӗҫлесси пе, партине илес тӗлӗшпе нимӗн те туман",—терӗ.

Халӗ парти райкомӗ сочувствуйушчисен хушшинчи тата партине илес ӗҫе лайӑхлатса йарас тӗлӗшпе тивӗҫлӗ решени йышӑнчӗ. Ку решенинче партин пуҫламӗш организацисене кулленхи ӗҫре конкретлӑн пулӑшса пыма палӑртнӑ.

Ҫак кунсенче парти кандидатне илме ыйтса районра 6 ҫын зайавлени панӑ.

Кужиков.

Районри хаҫатсене вӑхӑтра кӑлармала

Йӗрке тӑрӑх районри хаҫатсем кашни виҫӗ кунра пӗр номӗр тухса тӑмала. Хаҫатсене виҫӗ кунта пӗрре йӗркелӗ кӑларса тӑрсан, вӗсем тӑван ҫӗршывра, республикӑра, районра пулса пыракан ӗҫсене вӑхӑтра ҫутатса тӑма пултараҫҫӗ.

Нумай районсенче хаҫатсене вӑхӑтра кӑларса тӑраҫҫӗ. Турхан районӗнчи **„Коммунар"** хаҫат 1938 ҫулти йанварӗн 23-мӗшне 12 номӗр тухма ӗлкӗрнӗ те ӗнтӗ.

Хаҫат Совет Сойузӗнче пулса иртекен политикӑла пысӑк ӗҫсем ҫинчен вулакансене вӑхӑтра ҫырса пӗлтерме тӑрӑшать.

ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗн пӗрремӗш Ҫессийӗ ҫинчен хаҫат районри ӗҫхалӑхне вӑхӑтра тата лайӑх пӗлтерсе пычӗ. Хаҫат ҫӗршывӑн политикӑла пурнӑҫӗпе тан пыма тӑрӑшать.

Трак районӗнчи **„Колхозник"** хаҫат формат тӗлӗшӗнчен чи пӗчӗкки пулсан та, вулакансене интереслентерекен ыйтусене пурне те ҫырса пӗлтерме тӑрӑшать. Редакци коллективӗ хаҫата тирпейлӗ кӑларма тӑрӑшни куҫ умӗнчех.

Анчах хӑшпӗр хаҫатсем пӗрре те йӗркелӗ тухса тӑмаҫҫӗ. Ку вӑл хаҫат редакцисем хӑйсен ӗҫӗ ҫине ҫиелтен пӑхнипе чен килет. Унашкал хаҫатсене вара вулама та кичем. Вӗсенче ӗҫсыннисене вулама йурӑхлӑ материалсем ҫук, пур пулсан та тахҫан пулнӑ ӗҫсем ҫинчен ҫырнӑскерсем. Хаҫатсем политикӑла пурнӑҫран кайа йулаҫҫӗ, партипе правителствӑн решенисене, район умӗнче тӑракан задачсене пурнӑҫа кӗртме массӑна мобилизацилеймеҫҫӗ, ӗҫӗн организаторӗ пулаймаҫҫӗ, агитацилӗ тата пропагандислӑ роҗӗ чакать. Ку каллех хаҫата вӑхӑтра кӑларманнипе ҫыхӑнса тӑрать.

Акӑ хӑшпӗр фактсем. Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи **„Ударник"** хаҫата илӗпӗр. Ку хаҫатӑн, уйрӑмӑн илсен, унӑн редакторӗн тимсӗрлӗхӗ ҫинчен „Чӑваш Коммунӗ" пӗрре ҫеҫ мар кӑтартса панӑ. Анчах ӗҫе йусани халӗ те сисӗнмест. Сӗнтӗрвӑррисем епӗр хамӑр хуҫа, пире айакран кӑтартса пани нимӗн те мар тесе пулас. 1938 ҫула кӗҫӗ йатпа, йанварӗн 1-мӗшӗнче „Ударник" хаҫатӑн пӗрремӗш номӗрӗ, йанварӗн 3-мӗшӗнче 2-ш номӗрӗ тухмала пулнӑ. Анчах Мелников йулташ кахалне пула йанварӗн 5-мӗшӗнче ҫеҫ 1-мӗш номӗр тухнӑ. Ҫапла́х чӑсӑлса пырать, хаҫатӑн 2-мӗш номӗрӗ йанварӗн 10-мӗшӗнче, 3-мӗш номӗрӗ йанварӗн 15-мӗшӗнче, 4-мӗш номӗрӗ йанварӗн 17-мӗшӗнче тухнӑ.

Хаҫата ҫапла кайа йулса кӑларнинчен мӗн усси пур ӗнтӗ? Паллах, усӑ сахал. ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗн йанварӗн 12-мӗшӗнче пулса иртнӗ пӗрремӗш ларувӗ ҫинчен „Ударник" йанварӗн 20-мӗшӗнче тин пӗлтерет.

Хаҫат ытти ӗҫсене те йӗркелӗ ҫутатаймасть. 1938 ҫула кӗнӗрен вара „Ударник" хаҫат ҫинче тӗнчери ӗҫсем, Китайра, Испанире пулса пыракан ӗҫсем ҫинчен ҫырнисене пӗр сӑмах тупса вулаймӑн. Хаҫат чи кирлӗ материалсене (Обкомпа Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ суракӗ ҫинчен йышӑннине) 10—15 кун иртсен тин пичетлесе кӑларать.

Шӑмӑршӑ районӗнчи „Колхозник сасси" хаҫат та Сӗнтӗрвӑррисенчен кайа йуласшӑн мар. Хаҫат йӗркелӗ тухса тӑмасть. Йанвар уйӑхӗнче 12 кун хушшинче те виҫӗ номӗр ҫеҫ тухнӑ.

Ӗҫсем ҫапла тӑнине текех тӳсме ҫук. Хаҫатсем хӑйсен ӗҫне вӑхӑтра туман колхоз председателӗсене, бригадирсене, ытти работниксене тем калаҫа та вӑрҫаҫҫӗ. Анчах хӑйсем начар ӗҫлени, хаҫата вӑхӑтра кӑларманни, кирлӗ ӗҫсене вӑхӑтра ҫырса пӗлтерменни вулакансене тарӑхтарнине ӑнланса илмеҫҫӗ. Ҫакнах парти райкомӗсем те ӑнланмаҫҫӗ.

БАЙРОН САВВИСЕМ

Вӗҫлерӗн пурнӑҫӑн ҫулне

Герой, кунҫул сан татӑлчӗ!
Халь пуҫланать чапу сан шавлӑн—
Тӑван ҫӗршыв йурри́сенче
Йату сан пурӑнӗ мухтавлӑн
Тата ҫӗршывшӑн ыр ӗҫӳ
Нихҫан та манӑҫ пулас ҫук.

Сан ирӗк илнӗ халӑху
Йалан сана манмасӑр тӑрӗ.
Ес вилтӗн! Сан йухать йуну

Халь пирӗн йун тымарӗ тӑрӑх.
Санри пур паттӑрлӑх пире
Кӗрешӗве ҫӗклентерет.

Ҫапӑҫура, сана аса илсен,
Пуҫлать тӑшманӑн вӑй чакмашкӑн.
Герой чиспа вилни ҫинчен
Хӗрсем тытнаҫҫӗ йурламашкӑн.
Анчах кураймӑн йӗрнине,
Вӑл чакарать герой чысне.

Августӑ*) патне йанӑ станссем

Тӑрса йултӑм еп чапсӑр, телейсӗр,
Ҫалтӑрӑм тахҫанах аннӑ ман.
Есӗ ҫеҫ шут тытмарӑн шеллевсӗр
Манӑн ҫамрӑк чуна ҫунтарма.
Есӗ ҫеҫ чунупа чӳхенмерӗн,
Чӗрӳнте сан пиччу манӑҫман.
Хаклӑ йуратӑва та халь чӗррӗн
Санра ҫеҫ тупма май килчӗ ман.

Илӗртӳлӗн кулса, ҫутҫанталӑк
Патӑрах хӑйӗн мулӗсене.
Паранайрӑм ӑна еп йалт халӗ,
Тӑванӑм куллине асилсе.
Ҫилтӑвӑл хумсемпе ҫапӑҫмашкӑн
Пӗлӗт урлӑ вӗҫсе кайтӑрах,
Пирӗн хушӑмӑрта халӗ аслӑ
Океан выртнӑшӑн хуйхӑрап.

Йулашки йаккӑрӑм ӳкнӗ пултӑр,
Пуҫна пултӑр пӑтранчӑк шыва,
Пур ҫӗрте те манран хурлӑх
культӑр,
Хӑрамастӑп тискер кунҫултан!
Намассӑр ҫынсем тек елеклеҫҫӗ,
Пулӑшаҫҫӗ хайар кунҫула
Пур перех кӑкӑра ҫӗмреймеҫҫӗ,
Сан ҫинчен шугласан еп йалан.

Ҫынсенчен есӗ ҫеҫ пӑрахмарӑн
Тусӑм пултӑн—хӗрарӑмсенчен.
Пӗр пӗччен ӗлекрен хӑрамарӑн,
Ес манмарӑн мана пӗр пӗччен.
Ес ҫынсем суйнине ӗненмерӗн,
Сивӗнмерӗ манран чӗрӳ сан:
Сӑвнӑшӑн ӳпкевпе тӳлемерӗн,
Ырлӑхшӑн ес тумарӑн усал.

Ывӑнтӑм. Ылханмастӑп еп унщӑн,
Ҫынсене еп текех тӑшман мар.
Хыпаланчӑрах халь тарӑхулӑн
Пӗччеҫи ҫынпала ҫапӑҫма!
Ылханса вӗсене чарас ҫук еп.
Пӗр пек мар вӑрҫӑ кӗргрӗ тӑна:
Ҫӑмӑллап вӑрҫӑна, хӑвнине те.
Вӗсем урлӑ хаклӑрӑм сана.

Пушхирпе ҫӗмрӗксен хушшинче еп
Шикленмесӗр, хӑйулан тӑрап.
Йулашки тивӗҫе хӑт илеймӗс,
Еп памастӑп сан йура ӑва..
Курӑнмасть пушӑ хир те кичемӗн,
Ҫӗмрӗксем те мана пит паха.
Ҫӗмрӗксен айӗнче куртӑм епӗ
Вут ҫинче те пӗтмен ахаха.

*) Леди Августа Лей—Байронӑн аппӑшӗ. Ҫакӑ сӑвва поет аппӑшӗнчен йаланлӑхах уйӑрӑлса, Англирен тухса кайсан ҫырнӑ.

Усли Ваҫлейӗ куҫарнӑ.

Йӑнӑшсене хӑвӑрт тӳрлетмеле

Пирӗн парти хӑйӗн ретне фашисӑмӑн троцкисла - бухаринла шпионӗсенчен, буржуалӑ националисенчен тасатас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем туса иртерчӗ. Партин тата халӑхӑн усал тӑшманӗсене совет ҫӗрӗ ҫинчен пӗр ҫын хӑвармиччен шӑлса ывӑтмала.

Халӑхӑн усал тӑшманӗсем партипе совет влаҫӗн ӗҫӗшӗн чӗререн тӑрӑшса ӗҫлекен коммуниссем ҫинчен елек сарнӑ, ҫак елек тӑрӑх вӗсене партирен кӑларнисем те сахалӑх пулман. Халӑхӑн усал тӑшманӗсем партипе совет влаҫ еҫӗшӗн, халӑх ӗҫӗшӗн чӗререн тӑрӑшса ӗҫлекен партире тӑман работниксем пирки те ытлашши шанманлӑх сарса, вӗсене ӗҫрен кӑларма тӑрӑшнӑ. Вӗсем ҫакнашкал киревсӗр ӗҫе—пирӗн партин кадӑрӗсене салатса пӗтерес, хӑйсен тӑшманла ӗҫне витсе хӑварас тӗлӗшпе туса пынӑ. Коммуниса нимӗн сӑлтавсӑр партирен кӑларса пӑрахни, партире тӑман бољшевика нимӗн сӑлтавсӑр ӗҫрен кӑларса пӑрахни—клас тӑшманӗсемшӗн, карйерис-коммуниссемшӗн ҫеҫ усӑлӑ.

Ҫӗрпӳри йалхуҫалӑх техникумӗн директорӗ ҫинчен—Шаготов йулташ ҫинчен елеклесе ҫырнӑ жалӑбӑсем нумай пулнӑ. Йӗрке тӑрӑх ҫав жалӑбӑсене тӗплӗн тӗрӗслесе тухмала пулнӑ. Анчах Ҫӗрпӳ райкомӗ нимӗн шухӑшласа тӑмасӑр Шаготов йулташа партирен кӑларса пӑрахнӑ.

Нумай пулмасть „Чӑваш Коммунӗ" редакцине Вӑрнар районӗнчи коммуниссен пухӑвӗ ҫинчен ҫырнӑ статйа килчӗ. Ҫав статйана вуласан ӳҫ-пуҫ вирӗлле тӑрса каймала: Вӑрнар районӗнчи организацирен ҫуррине йахан тӑшман, йе тӑшмана пулӑшакансен йатне парса тухнӑ. Тӑшман йатне парса тухнӑ коммуниссем хушшинче партипе совет влаҫӗ ӗҫӗшӗн тарӑшса ӗҫлекенсем те нумай. Ҫакӑ ӗнтӗ вӑл ҫынсем ҫине, парти членӗсем ҫине чиновникле, бӳрократла, чунсӑр пӑхни пулать те.

Тӑшмансене партирен те, советпа хуҫалӑх организацисенчен те нимӗн хӗрхенмесӗр тӑпалтарса кӑлармала. Анчах пирӗн ҫак ӗҫе ҫӗнӗ кадрсене хӑйулӑн, татӑклӑн йертсе пырас ӗҫе лартассипе, вӗсене бољшевикла воспитани парассипе, вӗсемшӗн тӑрӑшассипе ҫыхӑнтармала.

Пирӗн партин пысӑк вӑйӗ—вӑл массӑпа таччӑн ҫыхӑну тытнинче, массӑсен сассине итлеме пӗлнинче, халӑх хушшинчи пултарулӑ, талантлӑ ҫынсене суйласа илсе ӗҫе лартма пултарнинче.

ПСК(б)П Тӗпкомӗн йанварти пленумӗ ҫынсене бољшевикла йертсе пырас, парти членӗн, работникӑн кунҫулӗ ҫине тимлӗн пӑхас, ҫӗнӗ кадрсене бољшевикла воспитани парас ыйтусене нихӑҫанхинчен те ҫивӗччӗн лартрӗ. Пирӗн задачӑ—Тӗпком пленумӗн решенине ҫине тӑрса пурнӑҫа кӗртсе, хамӑрӑн йӑнӑшсене хӑвӑрт тӳрлетесси, парти членӗсем ҫине, работниксем ҫине формаљна-бӳрократла пӑхассине хӑвӑрт пӗтересси пулать.

Парти ӗҫӗнчи сӑтӑрҫӑсен йулашкисене пӗтересси—парти организацисене, вӗсен руководителӗсене бољшевикла сыхӑ пулма хушать. Тӑшман темӗнле маскӑ тӑхӑнсан та, ӑна ҫийӗнчех тупса палӑртмала, тӑшмана туспа, туса тӑшманпа хутшӑнтармала мар. Тӑшмана тӑшманла тыткаламала, тус ҫине, хамӑрӑн работник ҫине йулташла пӑхмала. Тӑшмансем, карйерис-коммуниссем пирӗн таса работниксем ҫинчен елеклеме пӑхнине ҫийӗнчех ҫапса хуҫмала.

Ҫапла пулин те, ҫак чӑнлӑха ӑнланса илмен руководителсем пирӗн пур-ха. Партин Ҫӗрпӳ райкомӗн секретарӗ Агейев йулташ парти райкомӗ парти ретӗнчен кӑларнӑ чухне тунӑ йӑнӑшсем ҫинчен калама питех те йуратмасть. Райком тунӑ йӑнӑшсене хӑйулӑн йышӑнса ҫийӗнчех пӗтерес вырӑнне, вӗсене витсе хӑварма хӑтланать. Ҫак фактсем ӗнтӗ хӑшпӗр руководителсем хӑйсен йӑнӑшӗсене тӳрлетме питех кӑмӑллӑ пулманни ҫинчен калаҫҫӗ.

Йулашкинчен тепӗр факт. Турхан райкомӗпе районти „Коммунар хаҫат (ку тӗлӗшпе „Чӑваш Коммунӗ" хаҫат та йӑнӑш тунӑ) П. Жданкин йулташа халӑх тӑшманӗ вырӑнне хунӑ. Ун ҫинчен районри хаҫатра номӗртен номӗртех ҫырнӑ. Шалти Ӗҫсен Халӑх Комиссариачӗн районти пайӗн начаљникӗпе прокурор Жданкина суда пама та хатӗр пулнӑ. Анчах ӗҫе тӗплӗн тӗрӗслесен, Жданкин ҫинчен халӑх тӑшманӗсем елек сарни палӑрнӑ. Ҫапла пулин те, партин Турхан райкомӗ ҫак йӑнӑша тӳрлетесси ҫинчен шухӑшламасть, кун ҫинчен „Коммунар" хаҫат та нимӗн те ҫырмасть.

Парти работникӗн ленинла-сталинла руководител пулмала. Ку вӑл ӗҫри бољшевикла принциплӑха—тӑшмана хирӗҫ хайаррӑн кӗрешнине хамӑр ҫынсем ҫине тимлӗн пӑхассипе, тунӑ йӑнӑшсене ҫийӗнчех пӗтерессипе ҫыхӑнтармалине пӗлтерет. Хамӑрӑн ӗҫри ҫитӗнӳсемпе ҫитменлӗхсене танлаштарса виҫсе пӑхмала. Хамӑрӑн йӑнӑшсене шӑлса лартмала мар, вӗсене ҫийӗнчех йышӑнса, ҫийӗнчех пӗтермеле. Ҫакна тума хушать ПСК(б)П Тӗпкомӗн йанварти пленумӗн историлӗ решенийӗ.

Р. Шашков.

Хӗрлӗ йалав илчӗҫ

КӲКЕҪ. Апаткасри пукансем тӑвакан „Вперед" ертел 1928 ҫулта 20 членпа организациленнӗ. Малтанхи вӑхӑтрах, ҫуртсем пулман пирки, ертел членӗсем хӑйсен килӗсенчех ӗҫленӗ. Атӑл хӗрринчи кукӑр-макӑр хӑвасенчен пукансем, ҫатансем авса тунӑ.

1935 ҫулта ертел членӗсем хӑйсем ӗҫлесе илнӗ тупӑшпа мастерской ҫуртне лартса унта ӗҫлеме тытӑнаҫҫӗ. Ку вӑхӑта ертелӗн членӗсен йышӗ те чылай хутшӑнать. 1937 ҫулта 192 члена ҫитет.

1936 ҫулта ертел производствӑ планне 105 процент, 1937 ҫулта 138 прц. тултарнӑ. Вӑл шутран авса пукансем тӑвас плана 216 процент, ҫатансем тӑвассине 162 процент тултарнӑ. Ҫапла вара 1937 ҫулта ертел республикӑра малти рете тухрӗ. Ҫавӑнпа та ӑна йанварӗн 16-мӗшӗнче пулса иртнӗ ертел членӗсен пухӑвӗнче Чӑвашкуљпромсойуз республикӑри куҫса ҫӳрекен хӗрлӗ йалавне пачӗ. Ҫав пухӑрах ертелри чи лайӑх ӗҫлекенсене премисем пачӗҫ. Кирилловпа Петров йулташсене 150-шар тенкӗ, Щӗрбакова 75 тенкӗ укҫа парса премилерӗҫ. Премисем илнӗ хыҫҫӑн вӗсем малашне татах тӑрӑшса ӗҫлесе, ӗҫ тухӑҫлӑхӗпе продукци пахалӑхне хӑпартса пыма пулчӗҫ.

Ертел членӗсем хӗрлӗ йалава алла илнӗ хыҫҫӑн, иртнӗ ҫулта тунӑ ҫитӗнӳсене ҫирӗплетсе, кӑҫалхи ҫулӑн производствӑ планне тата ытларах тултарассипӗн вирлӗн ӗҫлеме пулчӗҫ. Йанварӗн 19-мӗшпе февралӗн 19-мӗшӗ хушшинче стахановла уйӑхлӑх туса иртерме йышӑнчӗҫ.

Й. Василйев,
Тр. Логинов.

Пукансем тӑвакан цех малта пырать

ҪӖМӖРЛЕ. Комбинатри стољарнӑй цехпа авса пукансем тӑвакан цех пӗр-пӗринпе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ. 1937 ҫулта стољарнӑй цех плана тултарассипе малти рете тухса, комбинатри куҫса ҫӳрекен хӗрлӗ йалава илчӗ.

Ӑмӑрту сарӑлсах пырать. Ҫак ҫулти 20 кун хушшинчи ӗҫе пӑхсан, авса пукансем тӑвакан цех малта пыни курӑнать. Вӑл 20 кун хушшинчи плана 116.4 процент, стољарнӑй цех 102.5 процент тултарчӗҫ.

Икӗ цехне те комсомолецсем йертсе пыраҫҫӗ. Вӗсене йертсе пырас ӗҫе нумай пулмасть лартнӑ. Стољарнӑй цех начаљникӗ Кусакин йулташ производствӑра ӗҫленипе пӗрлех общиствӑлӑ ӗҫсенче ӗҫлет, вӑлах комбинатри комсомол комитечӗн секретарӗ. Авса пукансем тӑвакан цех начаљникӗ Сопов йулташ политкружокӑн пропагандисӗ пулса ӗҫлет.

Цехӑн ҫамрӑк начаљникӗсен хастарлӑхӗ пысӑк. Вӗсем кӑҫалхи ҫул ӗҫре тата пысӑк ҫӗнтерӳсем тӑвассишӗн кӗрешеҫҫӗ. Анчах хӑшпӗр чухне вӗсене ҫителӗклӗ таран сырйо паманни чӑрмантарать.

Трак райкомолӗнчи бӳрократсем

(Красноармейец ҫырӑвӗ).

Епӗ Пӗтӗм Сойузри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунисла Сойузӗнче 1934 ҫултанпа тӑратӑп. Манӑн картӑчка малтанах Ҫӗрпӳ райкомолӗнчечӗ. 1935 ҫулта Чӑваш республикӗнче ҫӗнӗрен чылай районсем организациленчӗҫ, вӑл шута Трак та кӗрет. Пирӗн Пшонкӑ организацийӗ Трак районне куҫнӑ май, пирӗн картӑчкӑсем те Ҫӗрпӳ райкомӗнчен Трак райкомне пырса кӗчӗҫ. Ҫак куҫса ҫӳренӗ тата ҫӗнӗрен йӗркеленӗ вӑхӑтра, 1935 ҫулта, манӑн личнӑй картӑчкӑна ҫухатнӑ.

Личнӑй картӑчкӑна тупса йама епӗ 1937 ҫулта Трак райкомне виҫӗ хут зайавлени патӑм, анчах ман ҫине райкомол ҫавӑрӑнса та пӑхмарӗ. Комсомол райком секретарӗ Георгийев патне ыйтма пырсан: „манӑн халӗ сирӗнпе калаҫса тӑма вӑхӑт ҫук, райӗҫтӑвкома каймала", йе „столовӑйне апат ҫиме каймала" тесе кӑларса йаратчӗ.

Красноармеец Ф. Г. Сазанов.

Икӗ ҫамрӑк ӑмӑртаҫҫӗ

Ҫӗмӗрле комбинатӗнчи стољарнӑй цехра стољар пулса ӗҫлекен Пономарйов йулташ кӑҫал 19 ҫула кайрӗ. Вӑл комбинатра 1935 ҫултанпа ӗҫлет. Малтан фабрик-завод шкулӗнче вӗреннӗ.

Пономарйовӑн сменӑра нормӑ тӑрӑх шкаф ҫине 116 штук ручкӑ лартмала. Вӑл ӑна ытлашшипех тултарса ӗҫлет. Акӑ йанварӗн 20-мӗшӗнче 292 штук ручкӑ лартса плана 251,8 процент тултарчӗ. 21—22—23-мӗшӗсенче те лайӑх тӗслӗхсем кӑтартрӗ.

Пономарйов йулташ Йевҫагин йулташпа ӑмӑртса ӗҫлет. Договорта кӑтартнӑ тӑрӑх кашни кунхи нормӑна вӗсен 150 процентран кайа мар тултармала. Йевҫагин йулташ та ҫӑна ӑнӑҫлӑн тултарса пырать.

— Епӗ каҫхи вӑтам шкулта вӗренетӗп. Вӑл мана производствӑра ӗҫлеме чӑрмантармасть. Анчах маҫтӑрсем питӗ сахал пулӑшаҫҫӗ, материал ҫителӗклӗ памаҫҫӗ,—тет Пономарйов йулташ.

И. Николайев.

600-шер тенкӗ илеҫҫӗ

Есмӗлти „Бољшевик" промысла ертелӗ (Сӗнтӗрвӑрри р.) ҫултан ҫулах вӑйланса пырать. Ертел хӑй туса кӑларакан йапаласене (кӗпесем, витре-тас, чейник, атӑ пушмак) сутма йатарласах ларйок уҫрӗ.

Чӑпта ҫапас ӗҫ те ӑнӑҫлӑн пырать. Ку ӗҫре уйрӑмӑнах Родионовпа Башкиров йулташсем паха тӗслӗхсем кӑтартса ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем кашни кун 40—50 чӑпта ҫапса, уйӑхне 500—600 тенкӗщер ӗҫлесе илеҫҫӗ. Кӗпе-йӗм цехӗнче ӗҫлекенсем те лайӑх ӗҫлеме пуҫларӗҫ. Сидйакова йулташ кунне 15—20 кӗпе ҫӗлет, ушӑн сменӑри ӗҫ укҫийӗ 20 тенкӗне ҫитет.

Халӗ ертел тӗрӗ тӗрлекен производствӑ уҫрӗ. Ку ӗҫре ӗҫлекенсем малтанхи кунсенчех пысӑк хастарлӑхпа ӗҫлеме пуҫларӗҫ.

В. Ш., Е. Т.

Ҫӗнӗ пропагандиссем

Йанварӗн 2-мӗшпе 11-мӗшӗ хушшинче Йелчӗк районӗнче турӑс ран курсӗ пулса иртнӗ. Курсран 20 пропагандис вӗрентсе кӑларнӑ, вӗсем пурӗ 90 сехет вӗреннӗ.

Февраљ уйӑхӗнче татах ҫавӑн пек курс туса ирттерме хатӗрленеҫҫӗ. Унта 10 турӑсӑр вӗренмеле.

Ф. Тимофейев.

Китайӑн хаљхи столицинче

Чунцин, Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ Китайӑн пысӑк суту-илӳ центрӗ, Китай республикин вӑхӑтлӑх столици пулса тӑчӗ. Кунта халӗ тӗп учрежденисен ытларах пайӗ вырнаҫнӑ. Чунцин фронтран айакра, тусен хушшинче ларать. Йапони авиацийӗ, пӗтӗм ҫӗршывпе мирлӗ хуласемпе йалсем ҫине вӑрӑ хурахла тапӑнаканскер, ҫав хула патне пыма пултараймасть.

Хула Йанцзы йуханшывӑн сӑртла, чӑнкӑ ҫыранӗ хӗрӗнче, Цзйалин йуханшыв Йанцзына йухса тухнӑ ҫӗрте ларать. Цзйалин йуханшыв хулана икӗ пайа уйӑрать. Икӗ пайне те йӗри-тавра ҫтена туса ҫавӑрнӑ. 200 ытла чул картлашка шыв хӗрӗнчен пӗрремӗш урам патне илсе пырать. Урамсенче калама ҫук нумай халӑх ҫӳрет.

Столицӑна кунта куҫарнӑ хыҫҫӑн хулара 13 пин ҫын хутшӑннӑ. Пӗр кварталтах тӗрлӗ ӗмӗрсем тӗл пулаҫҫӗ. Производствӑн „потопченхи" орудийӗсемпе ӗҫлекен ремесла маҫтерскойӗсем, ҫавӑнтах банксен ҫичӗ хутлӑ пысӑк ҫурчӗсем. Вӑрӑм бамбут вӗрлӗк ҫинчи палавкинсем, шыв йӑтакансем, манахсем — чи малтан ҫавсем куҫ тӗлне пулаҫҫӗ. Шанхай, Нанкин, Ханькоу хыҫҫӑн ҫавсем пур те тахҫан-авалхи пек туйӑнаҫҫӗ. Анчах урам урлӑ ҫырса ҫакнӑ лозунга вулатӑн та, тахҫан-авалхи ҫинчен манатӑн. Китай халӑхне чӗнсе каланине вуласан, куҫ умне каллех пайанхи хула тухса тӑрать.

„Нацилӗ ҫӑлӑнӑҫ ассоциацийӗн" ҫтена хаҫачӗ патӗнче халӑх пухӑнса тӑнӑ. Урам тӑрӑх шавлӑн кумса ҫӳрессӗ сасартӑк чарӑнать. Паланкинсем, рикшасем, автомобилсем, шыв йӑтакансем чарӑнса тӑраҫҫӗ. Ҫар чаҫӗ иртет; кашни 20 ретрен—пулемйот звени.

Каласа хунӑ сехетре штаб библиотекинче мана френг тӑхӑннӑ вӑрӑм мар ҫын тӗп штабӑн Сычуаньри пайӗн начаљникӗ, тӗл пулчӗ. Епӗ панӑ ыйтӑвсене хирӗҫ вӑл Сычуань фронта мӗнле пулӑшни ҫинчен тата вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче провинци мӗнле пурӑнни ҫинчен каласа пама тытӑнчӗ.

Тӗп правителствӑн приказӗ тӑрӑх фронта регуљарлӑ ҫар йанисӗр пуҫне, Сычуань провинцийӗ 150 пин салтак-доброволец панӑ. Вӗсем халӗ ҫар ӗҫне вӗренсе пӗтереҫҫӗ. Вӑрҫӑ вӑрӑма тӑсӑлсан, пӗр Сычуань провинцийӗ кӑна 6 мӗлйун салтак ҫӑмӑллӑнах пама пултарать. Хаљхи вӑхӑтра, Шаньдун провинцийӗсӗр пуҫне, пур фронтра та Сычуань дивизийӗсем пур.

Нацилӗ оборонӑ зайомне Сычуань 17 мӗлйун доллар панӑ. Ҫар ваљљи мӗлйун ытла пулӑшу пухнӑ. Пулӑшма пуринчен ытла ылттӑн тата кӗмӗл панӑ. Сычуань—пуйан провинци. Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ Китайа аталантарас тӗлӗшпе пӗр виҫӗ ҫул кайарах туса хунӑ планра Сычуань провинцийӗ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Вӑрҫӑ ҫав плана хӑвартрах пурнӑҫа кӗртмеле турӗ. Сӑмахран, Сычуань провинцийӗшӗн пурнӑҫ ыйтӑвӗ пулса тӑракан транспорт чылай лайӑхланнӑ. Чаншана кайакан (Хунань провинцийӗн столици) тата Гуйана кайакан (Гуйчжоу провинцийӗн столици) ҫӗнӗ шоссе ҫулӗсемпе вӑрҫӑ пуҫланас умӗн кӑшт маларах ҫеҫ ҫӳреме пуҫланӑ. Анчах ҫав ҫулсем халь тин чӑн-чӑнах ӗҫлеме пуҫларӗҫ.

Чунцинпа Чанша хушшинчи 1.300 километрлӑ ҫул тулли нагрузкӑпа ӗҫлет. Ҫав ҫул тӑрӑх пӗлтӗр ийунь уйӑхӗнче ҫӳреме пуҫланӑ. Техникӑ тӗлӗшӗнчен ҫав ҫул кучухнехи чи лайӑх ҫулсен ретӗнче тӑрать. Малтан вӑхӑтлӑха тунӑ кӗперсем вырӑнне халӗ йалана темиҫе кӗпер туса пӗтереҫҫӗ. Халӗ Сычуань провинцийӗнчи малтанхи чукунҫула тӑвас ӗҫ пырать. Вӑл Чунцинпа Ченду хушшинче 550 километр тӑршшӗ пулать. Йутҫӗршывсенчен кирлӗ оборудованисем вӑраххӑн килсе тӑнӑ пирки ҫула туса пӗтерес ӗҫ тытӑнса тӑрать. Йанцзыпа Цзйалин йуханшывсем тӑрӑх ҫӳресси те чылай лайӑхланчӗ. Йапони Йанцзывӑн анат пайне тытса илнӗ хыҫҫӑн, тура Китай джонкисен тем пысӑкӗш флочӗ пухӑннӑ. Вӗсемпе Ханькоупа Сычуань провинцийӗ хушшинче груз туртараҫҫӗ.

Провинцин ту пуйанлӑхӗсене (кӑмрӑк, тӑвар, тимӗр, пӑхӑр, нефт, ӗҫлесе кӑларасси ҫине пысӑк шанчӑк хураҫҫӗ. Сычуанри кӑмрӑк пуйанлӑхӗсем вӗсене тупса палӑртнӑранпа ҫаплипех выртаҫҫӗ. Епӗр халӗ, терӗ тӗп штаб пайӗн начаљникӗ, Йанцзы йуханшыв тӑрӑх ҫӳрекен кимӗсене тата Ханькоури уйрӑм предприйатисене кирлӗ таран кӑмрӑк пама пултаратпӑр. Вӑрҫӑ пуҫланнӑ хыҫҫӑнхи малтанхи уйӑхсенче кӑмрӑк кӑларасси 257 проц. ӳснӗ. Кӑмрӑк кӑларма пуҫланӑ Йуннинсйань кописем кунсерен 800 тоннӑ кӑмрӑк параҫҫӗ. Малтанхи кӑмрӑк ушкӑнне Сычуанрен Ханькоуна йанӑ та ӗнтӗ. Тавара ытлашши пысӑк тӑкак тумасӑрах кӑларма тата ҫӗршыв ыйтнӑ таран ӳстерме пулать. Опыт йӗркипе шӑтарса пӑхни нефт запасӗсем пурри ҫине кӑтартса панӑ. Провинцин икӗ районӗнче: унӑн ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫ пайӗнче тата Чунцинран хӗвелтухӑҫ йенче нефт тупнӑ. Китайра халиччен нихҫан та нефт кӑларман. Халӗ чӑнахах та нефт кӑларма майсем пур.

Нацилӗ хӑтарулӑ вӑрҫӑ Сычуань хуҫалӑхне пур йенпе те аталантарса пыма май пачӗ. Ҫӗрмамӗк тата рис акакан ҫӗр лаптӑкне чылай аслӑлатма палӑртса хунӑ. Выљӑх-чӗрлӗх ӗрчетекен инҫетри районсене, ҫав шутрах Сикан провинцийӗне те (Сычуанрен хӗвеланӑҫнерех), ҫар ваљљи ҫӑм илме агентсене йараҫҫӗ. Китай правителстви Сычуане Йапони агрессине хирӗҫ вӑрӑм вӑхӑт кӗрешмели економикӑлӑ никӗс туса хума тӑрӑшать.

Тусем хыҫӗнче, бамбук рашши ӳсекен чӑнкӑ ҫыран хӗрӗнче университет ларать. Чунцин университечӗ ҫамрӑк-ха,—мӗн пурӗ те 7 ҫул кӑна тултарнӑ. Виҫӗ факуљтет, 700 студент, пӗр йутҫӗршыв профессорӗ те ҫук. Февралчен университетра каникул. Анчах студентсем саланса пӗтмен. Вӗсем пур те ҫар ӗҫне вӗренеҫҫӗ. 100 студент ҫавӑнтах пӑшалтан пеме тата аманнисене пулӑшу пама вӗренет. Занятисем ирех пуҫланаҫҫӗ. Акт залне тата вӗренӳ пӳлӗмӗсене пурне те студентсем йышӑннӑ. Университетра калама ҫук хӗрӳ ӗҫ пырать.

Айакра Нанкинран куҫарнӑ Тӗп университет ларать. Шанхайран тата фронт ҫывӑхӗнчи вырӑнсенчен Чунцина мӗн пурӗ 7 вӗренӳ заведенийӗ куҫарнӑ. Студентсем каникул вӑхӑтӗнче кунӗпех, ирпе те каҫпа та, ҫар ӗҫне вӗренеҫҫӗ—фронта кайма хатӗрленеҫҫӗ.

Хулана таварнатпӑр. Машинӑ Чунцинпа Чевду хушшинчи шоссепе пырать. Машинӑ салтака тин ҫеҫ илсе кайакан колоннине хуса иртсе кайать. Ҫамрӑк хречсенсем,—нумайӗшӗ ҫара уран, шлепке вырӑнне тутӑр ҫыхса йанӑ,—стройпа хулана утаҫҫӗ. Малтанхи шеренгӑра ҫар инструкторӗсем пыраҫҫӗ. Вӗсем, ҫар ваљљи салтак пухнӑ хыҫҫӑн, йалтан таварнаҫҫӗ. Пулас салтаксем, малтан пыракан инструкторсем хыҫҫӑн васкаса, хӗрӳлӗн калаҫаҫҫӗ.

Ҫиран хӗрӗнче тин ҫеҫ ҫитнӗ джонкасем тӑраҫҫӗ. Машинӑ пайӗсене, станоксене, моторсене пушатаҫҫӗ. Шыв таможни урлӑ 15 пин тоннӑ ытла машинӑ тухнӑ. Вӗсене Чунцине йулашки уйӑхра илсе килнӗ. Кунта пӗр темиҫе шултра предприйати куҫараҫҫӗ. Чунцине план тӑрӑх Шанхайран чылай фабрикӑ куҫармала. Фабрикӑсене чылайӗшне план тӑвачченех куҫарнӑ пулнӑ. Иртнӗ ернере джонкӑсем ҫине тийесе Нанкинран киностуди оборудованине йалтах куҫарса килнӗ.

Хула хыҫӗнче ҫуртсем лартма вырӑн тасатаҫҫӗ. Ҫав ҫуртсене тинӗс хӗрӗнчен куҫаракан фабрикӑсемпе заводсене вырнаҫтараҫҫӗ. Сулахай ҫиран хӗрӗнчи пысӑк цемент заводӗ тулли нагрузкӑпа ӗҫлет. Уйӑх пӗтнӗ тӗле електроенерги парасси 3 мӗлйун киловатран 12 мӗлйуна ҫити ӳсет. Пӗр ҫӗнӗ турбогенератора ӗҫе йанӑ та ӗнтӗ.

Китайӑн вӑхӑтлӑх столицийӗ чи малтан пысӑк промышленнӑҫла-економикӑлӑ центр, Йапони агрессине хирӗҫ пыракан нацилӗ-хӑтарулӑ вӑрҫӑ никӗсӗ пулса пырать.

Вл Рогов
(ТАСС)-ӑн Китайри корреспонденчӗ
(„Правда", 1938 ҫ. йанварӗн 26-мӗшӗ)

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

ÇУРÇĔР КИТАЙРА

ЛОНДОН, 26. (ТАСС). „Дейли Уоркер" хаçат корреспонденчĕ Шаньси провинцинчен пĕлтернĕ тăрăх, Китайри нацилĕ-революцилĕ 8-мĕш çар отрйачĕсем Шаньси тата Хебей провинцисен чикисем тăрăхĕнчи чылай пунктсенче Йапони çарĕсене питĕ вайлăн çĕмĕрсе тăкнă. 8-мĕш çар отрйачĕсем йапонецсене сартлă тискер вырăна илĕртсе пынă та вĕсем çине атакăланă. Çавăн чухне 300 йапонец вилнĕ. Саккăрĕмĕш çар отрйачĕсем çавăн пекех Цзаньхуан хулине йышăннă (Хебей провинцин хĕвеланăç пайĕ).

Малалла корреспондент Шаньдун провинцинче Китай партизанĕсем йапонецсем çине сисмен хушăран пырса вайлăн тапăнса, Тенчжоупа Цзинин хушшинчи икĕ хулана çĕнерен йышăнни çинчен кăтартса парать. Çав вăхăтрах Йапонецсем Фейçань (Йанчжоуран кăнтăрпа хĕвелтухăçнеле) çине атакăланине китайецсем сирсе йана.

ХАНЬКОУ, йанварĕн 26-мĕш. (ТАСС). Шаньдун провинцинчи Таньцзин—Пукоу чукунçул секторĕнче Цзинин хули таврала хайар çапăçусем пулса иртеççĕ. Йапони çарĕсем Цуйфуран çурçĕреле Тайань патнеле чакнă. Çавна пула Йапони командованийĕ кунта пысăк подкрепленисем илсе пырать.

ЛОНДОН, йанварĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Бритиш Йунайтед пресс агенствин Шанхайри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Китайри çар влаçĕсем Суйауань провинцинче çапăçакан партизансене Китайăн ытти çарĕсемпе пĕрле Йапони çарĕсем çине наступлени тума хушнă.

Хебей провинцин кăнтăр пайĕнче Дамин хули районенче Китай партизанĕсен отрйачĕсем Йапони çарĕсене хĕстерсе пынă, вара Йапони çарĕсен ирĕксĕрех Вей йуханшывĕ урла каçса кайала чакма тивнĕ. Китайецсем пулеметсенчен персе Йапони салтакĕсен пысăк пайне шыва путарнă. Партизансем Лунванмиаона (Даминран кăнтăрала) йышăннă.

ВĂТАМ КИТАЙРА

ХАНЬКОУ, йанварĕн 26-мĕш. (ТАСС). Уху хули районĕнче (Аньхуей провинци) Китай çарĕсем контрнаступлени тунă пирки Йапонин Уху хулинчи гарнизонне вунă пин салтака çити ўстернĕ. Йанварĕн 25-мĕшĕнче Йапони çарĕсем авиаци хўтлесе пынипе Уху йĕритавралĕ сартлă вырăнсем çине наступлени тума пуçланă, çав вырăнсенче Китай партизанĕсемпе Китайăн йаланхи çар отрйачĕсем тăнă пулнă. Йапонин Йанцзы йуханшывĕ çинче тăракан сакăр кононерки çумне тата икĕ канонерка пырса пĕрлешнĕ. Вĕсем Китай çарĕсен позицисем çине икĕ йенчен персе тăраççĕ.

Йанварĕн 25-мĕшĕнче Китай самолĕчĕсем Суаньчен (Ухуран кăнтăрпа хĕвелтухăçнеле) çине тата унăн таврашĕнчи Йапони позицийĕсем çине çĕнĕрен бомбăсем пăрахнă.

ХАНЧЖОУ ПАТĔНЧИ ФРОНТРА—ЛĂПКА

ШАНХАЙ, йанварĕн 26-мĕш. (ТАСС). Йанварĕн 26-мĕшĕнче Китай бомбовозĕсен ескадрилйи Нанкин çине пырса тапăннă.

КĂНТĂР КИТАЙРА

ЛОНДОН, йанварĕн 26-мĕш. (ТАСС) „Таймс" хаçатăн Гонконгри корреспонденчĕ çырнă тăрăх, йанварĕн 25 мĕшĕнче Паньтоу (Жемчужнайа шыв (йухса тухнă çĕрте, Гонконг çиккинче) çине пенĕ чухне Йапони крейсерĕсем кăна мар, тата Йапони самолĕчĕсем те хутшăннă. Йапони самолĕчĕсем уйрăмăнах Шекпари аеродром çине хыттăн тапăннă. Туншань сывăхне йапонецсем пысăк бомбăсем темиçе те пăрахна, ĕлĕк çав вырăнта йутçĕршыв çыннисен пысăк резиденцийĕ пулнă. Бомбăсем пăрахнипе темиçе çурт аркаиннă, вăл шутра Итали консульствин çурчĕ те ишĕлнĕ.

Китай çыннисем каласа кăтартнă тăрăх, йанварĕн 22 мĕшĕнче Йапони самолĕчĕсем бомбăсем пăрахса тата пулеметсенчен персе шыв çинче çурекен моторлă кимĕсене иккĕ путарнă, кимĕсем çинче пассажирсем пулнă. Çĕр çын ытла пĕтнĕ.

„Дейли телеграф энд морниг пост" хаçат корреспонденчĕ Гонконг йĕритавра Йапонин çар карапĕсем нумайăн пухăнса тăни çинчен паллă тăвать.

ЙАПОНИ АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ.

ЛОНДОН, йанварĕн 26-мĕш. (ТАСС). Йапони авиацийĕ Кантон—Коулун тата Кантон—Ханькоу чукунçулĕсем çине пырса тапăнма халь те чарăнмасть. Йапонецсем Китайа йутçĕршывсене тухса çўреме май паракан чукунçула, Китайпа Гонконг хушщинчи чукунçула çĕмĕрсе, Китайа Гонконгпа çыхăну тытмала мар тăвас тĕллев лартнă. Анчах та йапонецсем темĕн чухлĕ пырса тапăнсан та чукунçул çинче ĕçлекенсем паттăрăн ĕçленипе çав çулпа пуйăссем пĕрмайах çўреççĕ.

Йанварĕн 25-мĕшĕнче Йапони самолĕчĕсем Кантон—Ханькоу чукунçулĕ çинчи Инде станци çине, çавăн пекех татах Кантон—Коулун чукунçулĕ çинчи Саньпуй станци çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе вунă çын ытла вилнĕ. Чукунçул линийĕ арканнă тата темиçе вагон сийенленнĕ.

Çав кунхинех Амой (Фуцзйань правинцин кăнтăр пайĕ) хули çине 25 бомбă пăрахнă. Хула çине йапонин çар карапĕсем çинчен те пенĕ. Пĕр таможнă катерне тата баржăна шыва путарнă. Темиçе çурт ишĕлсе аннă.

ШАНХАИ, йанварĕн 26. (ТАСС). „Синьвеньбао" хаçат çапла пĕлтерет: йанварĕн 25-мĕшĕнче Йапони самолĕчĕсем Нинбо, Цуйчжоу, Линцу (Шанчжоуран кăнтăрала) тата Тулу (Цжецзйан провинци) çине бомбăсем пăрахнă, çавăн пекех тата Цзйансу провинцинчи хăшпĕр пунктсем çине те бомбăсем пăрахнă. Цуйчжоура Йапони самолĕчĕсем мирлă халăхсем çине пулеметсенчен пенĕ.

Çав кунхинех Йапонин сакăр самолĕчĕ Кантонри аеродром çине тапăннă. Самолетсене китайецсем зенитлă орудисенчен пенĕ.

Йутçĕршывсенче

1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа йапонецсем тытса илнĕ. Шанхай урамĕсенче чирлесе тата выçăпа вилнĕ 10 пин китайец пуçтарса илнĕ. Вĕсем хушшинче беженцăсем ытларах.

Польшăра Люблинск войеводствинчи Замостйере округ сучĕ коммунисла ĕçсемшĕн айăпланакан 13 çын ĕçĕ пирки приговор йышăннă. Полици агентне вĕлернĕ, тесе айăпласа пĕр çыннине çакса вĕлерме тунă. Айăпланакансенчен ыттисене тĕрĕлрен срукпа 2 çултан пуçласа 15 çул таран тĕрмере хупса усрамала тунă.

Швецире Китайа пулăшакан комитет организациленĕ. Комитет тĕрлĕ йапаласем, çакнашкалах тата медикаментсем пухма тытăннă. Вăл йапаласене Китайа Хĕрлĕ Хĕрес ушкăнĕ вальли йараççĕ.

Долорес Ибаррури Париже пырсан Спорт Дворецĕнче республикăлă Испани хутне кĕрекенсен 40 пин çынлă митингĕ пулса иртнĕ.

ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: (сулахайран сылтăмала) Жак Дукло, Долорес Ибаррури тата Андре Марти митинг президиумĕнче.

(Союзфото.)

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăçри (Арагонири) фронт

Гавас агенстви пĕлтернĕ тăрăх, хĕвелтухăçри фронтра Теруел участкинче икĕ кун хушши лапка тăнă хыççăн, республикă çарĕсем çапăçусене çĕнĕрен хăйсен аллине илнĕ. Альфамбра йуханшывĕн сулахай йенче пăлхавçăсене малала куçма чарса, республикă çарĕсем йанварĕн 25-мĕшĕнче тул çутăлсан Сингра секторĕнче, Теруелрен çурçĕреле 30 километрта, Теруеле Калатайудпа пĕрлештерсе тăракан чукунçул патĕнче, пăлхавçăсем çине атакăланă.

Авиаци тата танксем йышлăн пулăшнипе, артиллерирен персе вайлăн хатĕрленнĕ хыççăн, республикă çарĕсем пăлхавçăсем тăракан 1.071 высотана атакăланă, кĕске вăхăта пынă, анчах та пит те хайаррăн çапăçнă хыççăн çав высотана йышăннă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Сингра секторĕнчи ытти участкăсенче çапăçакан республикă çарĕсем Ойа йалне тытса илсе Сингра патне çитиччен малала куçнă.

Йанварĕн 26-мĕшĕнче Сингра секторĕнче республикă çарĕсем активлăн çапăçнă. Республикă артиллерийĕ Пико дел Сорро тата Монте Пеладо патĕнче пăлхавçăсен позицийĕсем çине пенĕ. Çавăн пекех тата республикă артиллерийĕ Кампильо районĕнче, Теруелрен хĕвеланăçнеле, пăлхавçăсен пĕр çĕреле пуçтарăнса пыракан çарĕсем çине пенĕ.

Авиаци ĕçĕсем

Сингра секторĕнче республикă чăçĕсене малала куçма пулăшса, республикă 50 самолечĕ Сингра районĕнчи пăлхавçăсен çарĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Республикă самолĕчĕсен тепĕр ушкăнĕ Сиерра Паломера районĕнче пăлхавçăсен йăвăр бомбардировщикĕсемпе тĕл пулса çапăçнă. Пăлхавçăсен бомбардировщикĕсене хăварт вĕçекен истребителсем хўтлесе пынă. Çапăçура пăлхавçăсен виçĕ моторлă пĕр бомбардировщикне персе антарнă, çавăн йышши тепĕр икĕ бомбардировщикĕ пĕлĕт пек тĕтĕм кăларса тарса пытаннă.

Хăйсен базисене тавăрăннă чухне республика самолĕчĕсем каллех пăлхавçăсĕн самолĕчĕсен тепĕр ескадрилйипе тĕл пулнă, анчах та вăл республикă самолĕчĕсене хирĕç пемесĕрех тарса пытаннă.

Йанварĕн 26-мĕшĕнче 12 сехет те 40 минутра пăлхавçăсен авиацийĕ Ель Грао тата Валенси хули çине бомбăсем пăрахнă. 125 çын вилнĕ, 208 çын аманнă. Вилнисем хушшинче—Англин „Дауэр Эбби" парохочĕн капитанĕ Арнольд Кронта пулнă. (ТАСС).

Йапони çарĕсен чыссăрлăхĕ

НЬЮ-ЙОРК, йанварĕн 26-мĕш. (ТАСС). „Нью-Йорк Таймс" хаçатăн Шанхайри корреспонденчĕ çапла çырать: Йапони çарĕсем халь те Нанкина çаратни, ирĕксĕрлени, йĕркесĕр алхасни Йапони çарĕнче дисциплинă пачах çуккине ĕненterсе парать. Йапонин Шанхайри цензури,—тесе çырать корреспондент,—йутçĕршыв корреспонденчĕсене Нанкинри лару-тăрусем çинчен пĕлтерме ирĕк памаççĕ, ун пек пĕлтерўсем „Йапони çарне хисепсĕре кăлараççĕ", тесе шутлаççĕ.

Анчах та, Вашингтонри лайăх пĕлсе тăракан официаллă çынсен шухăшĕпе, йапонецсен Нанкинри террорĕ дисциплинă çуккипе мар пулнă. Йăлтах урăхла, вăл террор, çавнашкалах тата Америкăн „Пеней" йатлă канонеркине путарни те Йапони салтакĕсем аслă командованин пĕлсе тăрсах Китайри лăпкă пурнакан халăха тата йутçĕршыв çыннисене террор тăвас майпа тунă приказа пурнăçа кĕртнипе пулнă.

ХАНЬКОУ, йанварĕн 26-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешўлĕ Штатсен правителстви Йапони военшчини Нинкинра нихçан илтмен тискер ĕçсем тунине протесленĕ май, „Дагунбао" хаçат çапла çырать: „Йапони правителстви хăй çарĕ мĕн тунипе контроль тăваймасть тата хăйĕн обйазателствине пурнăçа кĕртме пултараймасть. Йапони пĕтĕм тĕнчери правапа етикăпа пăхăнмасть, вăл çар вайне çеç пăхăнать". Йапонецсем,—тесе çырать малала хаçат,—мирлĕ халăха тискеррĕн пусмăрласа мăшкăланине тăрă шыв çине кăларасран хăраса, йутçĕршыв çыннисене Нанкина кĕме ирĕк памаççĕ.

„Хĕрлĕ хĕрес" организаци те,—тет хаçат,—Йапони интервенцинчен сийен тўснĕ мирлĕ халăха пулăшу пама пултараймасть.

Кĕскен

ХАНЬКОУ, йанварĕн 26 мĕш. (ТАСС). Хĕрĕх пин ытла Китай бойскаучĕсем Китайри лазаретсенче тата ытти çар учреждениссенче ĕçлеççĕ, вĕсем çара питĕ пысăк пулăшу параççĕ.

Театр

ĂНĂÇСĂР ĔМĔТ

Çак кунсенче Шупашкарти Пионерсен çуртĕнче ача-пăчасен театрĕ вырăссен аслă писателĕ А. П. Чехов çырнă „Хамелеон" водевиле лартса пачĕ.

Ку пйесăра автор патша Российĕнчи хула пуçлăхĕсен сĕмсĕрлĕхне тăрăхласа, сивĕч чĕлхепе çырса кăтартнă.

Пĕр пĕчĕкçĕ провинцилĕ хулари пасара пынă халăх шавлать. Пĕрисем сутаççĕ, теприсем хăйсене кирлĕ таварсене илме хăтланса тĕрмешеççĕ. Ака ремесла ĕçĕпе пурăнакан Хрўкин хăйне валли таварсем шыраса чупса çўрет. Çул çине ăнсăртран пĕр хайар йытă чупса тухать те Хрўкинăн аллине çыртса йывăр суранлатать.

Ку вăхăтра Хрўкин патне Очумелов генералпа Йелдырин городовой пырса тухаççĕ. Вĕсем малтан Хрўкин хутне кĕреççĕ. Усал йытта персе пăрахса, хуçине штрафлама хушаççĕ. Çавăнтах, ку йытă Шигалов генералăн пулни палăрсан, Хрўкина хăйне айăплама пуçлаççĕ. Усал йытă та авана тухать. Чехов ку пйесăра ĕлĕк чухăн çынсем пуйансем умĕнче правасăр, чыссăр, вальхран та йўнĕрех тăнине çав тери вайлă образсемпе кăтартса парать.

Хамелеонла Очумелов рольне Осипов артист ăнланса выльăрĕ. Вăл обстановкăна час туйса илсе, унпа усă курма пĕлет. Çавăнпа та вăл выльни пйесăра пулса иртекен ĕçсемпе питĕ çăмăллăн çыхăнса пырать. Çавăн пекех А. Илйин артист выльанине те палăртмала. Вăл сценă çинче выльама пуçланăранпа сахал мар авăн образсем туса кăтартрĕ. Пуринчен ытла вăл „Матроспа Школьар" постановкăра çĕвĕç рольне, „Детство маршала" пйесăна лартнă чухне Василий Горобов большевикĕн рольне аван выльарĕ. Çавăн пекех Илйин йулташ „Хамелеон" постановкăра та Хрўкин рольне килĕшўлĕ кăларчĕ.

„Детство маршала" пйесăра Çемкă рольне ăнăçлăн выльанă В. Самуков халĕ Йелдырин городовой рольне уççăн кăлараймарĕ. Унăн творчествăлă хастарлăхĕ пысăк, анчах режиççор унпа сахал ĕçленĕ.

„Хамелеон" постановкăра пысăк çитменлĕхсем кăна мар, пысăк йăнăшсем те палăрчĕç. Вĕсенчен пĕри—натуриалисăмла йăнăш.

Пйесă тăрăх сценă çинче йытă кирлĕ. Режиççор, постановкăна аванрах кăларас шутпа пулас, сценă çине чăн-чăн йытă кĕртет. Анчах капла туни постановкăн пахалăхне питĕ нумай чакарчĕ. Режиççор шухăшĕ пурнăçа кĕмерĕ. Вĕрентмен йытă артиссене çыртса пĕтерсе, хăйĕн рольне пĕтермесĕрех сценă çинчен тухса тарчĕ.

Ку ĕç çине ответсăр, çийелтен çеç пăхнине пĕлтерет. Ача-пăча театрĕнчи режиççорсем çапла киревсĕр хăтланни куракансене тарăхтарать.

Тĕлĕнмеле: пушара кăтартмала пулсан, ача-пăча театрĕн режиççорĕсен шучĕпе, чăнахах сценăна чĕртсе йамал-ши вара?

Ку пĕрре култарать, тепре тарăхтарать. Театр ĕçĕнчи çакăн пек киревсĕр мелесивлемеле.

Г. Горшков.

ХРОНИКĂ

—Польшă çĕрĕ çинче, Здолбуново станцинче, Совет Союзĕн пойăсĕ тĕлĕшĕпе Польшă çыннисем йĕркесĕр ĕçсем тунисем пулнăччĕ. Çавăн пирки ССР Союзĕн Йутçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕпе Польшă республикĕн Мускаври посольстви пĕрпĕрин патне çырусем çўретнĕ. Польшă посольстви халь ĕнтĕ,—пирĕн Союзăн Йутçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариатне нотă йарса,— Польшă правителстви Шепетовкă—Здолбуново участкинчи чукунçул çинче йĕркелĕ çўреме мĕн кирлине турĕ, тесе пĕлтернĕ.

Йутçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕ çак çулхи йанварĕн 27-мĕшĕнче йанă нотăра Польшă посольствине—çав пĕлтерўве асра тытма кăмăлласа йышăнатпăр, тесе пĕлтернĕ.

(ТАСС).

СУД

Совет саккунĕсене пăсса ĕçлекен йалсовет председателĕ

Йегор Йемелйанов Крымзарайкă (Елĕк р.) йалсовет председателĕ пулса ĕçленĕ. Вăл хăйĕн ĕçĕнче совет саккунĕсене пăхăнса ĕçлес вырăнне, вĕсене пăсса пынă.

1937 çулта пурĕ саккунсăр çитмĕл опис туса çынсен йапалисене, пурлăхĕсене сутнă. Тĕрлĕ тўлевсене тўлесе татман тесе, çынсенчен илсе тухнă йапаласене хăй çумне чикнĕ. Самахрайа, Лубашка йалĕнчи Й. Григорйевăнне сакăр тир илсе тухнă та, вĕсене нимле тўлев çине те кĕртмен, йăлтах хăй илнĕ. Вăрманкасри пĕр çынăнне торги туса йапала 100 тенкĕлĕх ытлашши сутнă пулнă. Анчах та Йемелйанов çак 100 тенкĕне хуçине кайала тавăрса паман, ăна хăй кăсйине чикнĕ. Çавăн пекех Крымзарайкă йалĕнчи Лука йатлă çын патне пырса, „укçа-тенкĕ тўлеместĕр" тесе унăн арăмне хĕнесе ним опис тумасăрах йулашки кĕрĕкне илсе тухса кайнă. Кун пек киревсĕр ĕçсем Йемелйанов йенчен татах нумай пулнă.

Йалсоветĕнче çынсене йулташлăн каласа ăнлантарса парас вырăнне, Йемелйанов çынсене вăрçса, хăратса пĕтерне. Халăхсем хушшинче массăлă-ăнлантарулă ĕçе сарса пырасси çинчен шутласа та пăхман вăл. Унăн ĕç меточĕ—совет саккунĕсене пăсса ĕçлесси, халăхсене вăрçса хăратасси пулнă.

Елĕк районĕнчи халăх сучĕ Йемелйанован киревсĕр ĕçĕсене пăхса тухнă хыççăн, ăна 3 çул хушши хупса усрамала тата халăх укçисене 1200 тенкĕ шыраса илмеле турĕ.

В. Иефремов.

Ответлă редактор заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Академи театрĕнче

Йанварĕн 29-мĕшĕнче

Чăвашла спектакль

А. Н. ОСТРОВСКИЙ

„БЕДНОСТЬ НЕ ПОРОК"

(3 пайлă комеди)

режиççор К. И. ИВАНОВ лартать. П. Т. Медиков куçарнă. Художник Н. Ф. Байаков.

Талон №96; Абонемент №-4 талон №-9

Çыхăну управленин автобазине

йалан ĕçлеме кирлĕ:

1. Автомашинăсене лайăх пĕлекен опытла електрик
2. 6-мĕш тата 7-мĕш разрйадсенчи слесăрсем
3. Пĕр çултан кайа мар стажлă шоферсем

Адрес: Çыхăну çурчĕ, 2-мĕш хутлăх 30-мĕш пўлĕм. Телефон №-4—07

3—2

Фашисла агрессорсем Лигă нацине хирĕç поход туни

Лигă нацине 1919 çулта, унăн уставĕнче каланă пек, „халăхсем хушшинчи туслă пурăнассине вăйлатма тата вĕсен мирĕпе хăрушсăрлăхне гарантилеме" тунă. Çавăн пекех тата Лигă наци уставĕнче—пĕр-пĕр государствă вăрçă пуçласа йарсан, Лигă нацин ытти членĕсем „çийĕнчех унпа мĕн пур суту-илў тата финанс çыхăнувĕсене татма пулаççĕ" тесе каланă.

Хăй пурăннă вăхăт хушшинче Лигă наци кирлĕ пек витĕмлĕн ĕçлесе пыраймарĕ, çакăнпа ĕнтĕ фашисла вăрçă чĕртсе йаракансем усă курнă, халь те усă кураççĕ.

Лигă наци вăйсăррипе усă курса, Йапони 1931 çулта Манчжурине пĕр наказанисĕрех туртса илчĕ, 1936 çулта Итали Абиссинине тытса илчĕ. Германипе Итали иккĕш пĕрле 1936 çултанпа Испани халăхне хирĕç вăр-хурахла вăрçă тăваççĕ. Иртнĕ çулхи июль уйăхĕнче Йапони Китай халăхне хирĕç çĕнĕ вăрçă пуçарса йачĕ.

Çаксенче пуринче те ĕнтĕ Лигă наци уставне уççăнах пăсаççĕ, апла пулсан та иртĕнсе кайнă агрессорсене витĕмлĕ отпор пама Лигă наци вăйсăрри палăрчĕ.

Лигă наци вăйсăр пулнин тĕп сăлтавĕ вăл—агрессорсем умĕнче кайала чакас хăравçăла политикă, вĕсемпе калаçса татăлас политикă, çав политикăна йертсе пыракан буржуала-демократилĕ государствăсем—Англипе Франци йаланах пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

Англипе Франци агрессорсем умĕнче тат-ти-сыпписĕр кайала чакни агрессорсен аппетитне чĕртсе çеç йарать тата вĕсем ытларах та ытларах требованисемпе претензисем кăларса тăратасси патне илсе пырать. Çак агрессорсене пулăшас тата вĕсем умĕнче кайала чакас политикă малашне те пурнăçа кĕрсе пырсан, вăл политикă Лигă нацине тата ытларах вăйсăрлатма пултарать.

Калама çук пысăк çитменлĕхсем пуррине пăхмасăрах, çапах та тĕнчере çĕнĕ вăрçă туса йутçĕрсем туртса илес тĕлĕшпе хăйсен планĕсене пурнăçа кĕртме хăтланакан фашисла агрессорсемшĕн Лигă наци чăрмав пулса тăрать. Çавăнпа та вĕсем Лигă нацине тĕрлĕ майсемпе аркатса йама, пĕтĕм тĕнчипе мирлĕ пурнăçа сыхласа усрассишĕн интересленекен государствăсем килĕштерсе пурăнассине аркатма хăтланаççĕ.

Тĕнчене империалисăмла майпа çĕнĕрен валеçессишĕн кĕрешнĕ çĕрте хăйĕн аллисене пушатас тесе, Йапони 1932 çулта Лигă нацинчен тухрĕ. 1933 çулта Лигă нацинчен гитлерла Германи тухса кайрĕ. Йулашкинчен, 1937 çулхи декабĕрте, Германи хĕснипе, Лигă нацинчен Итали тухрĕ.

„Коминтернпа кĕрешес" витĕмпе нумайах та пулмасть пĕр-пĕрин хушшинче вăрçă союзĕ туса, тĕнчери чи агрессивлă виçĕ государствă Лигă нацине хирĕç тăвакан хăйсен походне тата ытларах вăйлатрĕç. Фашисла агрессорсем политикăпа економикă йенчен хăйсене пăхăнса тăракан государствăсене—Лигă наци членĕсене—пур майсемпе те Лигăран тухма хĕтĕртеççĕ. Çав вăхăтрах вĕсем çав çĕршывсем (Польшă, Австри, Венгри, Швейцари) пулăшнипе Лигă нацине тата ытларах вăйсăрлатма, ăна хăйсен нушисене килĕшўлĕрех туса хума хăтланаççĕ. Гитлерла Германин шанчăклă тарçи—Польшăн йутçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бек Лигă наци уставне çĕнĕрен пăхса тухма, Лигăва канашлакан оргăн çеç, агрессорсемшĕн пачах сийенсĕр те хăрушсăр оргăн çапла туса хума ыйтса тухса калаçнă, туни вăл—лăпкă саманана хўтĕлмели хĕçпăшал пулса тăракан Лигă нацине, тĕрĕссипе илсен, вĕлернийех пулнă пулĕччĕ.

Агрессорсемпе вĕсен агентурине Лигă наци уставĕн 16-мĕш статйи уйрăмах хытă тарăхтарса шăртлантарать, вăл статйара мирлĕ пурнăçа пăсакансене хирĕç економикăлă, финанслă тата вăрçăлă санкцисем (каратель-нăй мерăсем) йышăнмалли çинчен каланă.

Польшă тата ытти государствăсем—Лигă наци членĕсем, фашисла агрессорсем хыççăн пыракан государствăсем Лигă нацине „реформă" тăвасси çинчен кăларса таратнă ыйтува Лигă наци совечĕн çак кунсенче уçăлакан 100-мĕш сессине сўтсе йаваççĕ. Çак çесси Англипе Франци фашисла агрессорсем Лигă нацине хирĕç уççăнах поход тунине татăклă отпор пама шутланипе шутламаннине кăтартса парĕ.

Совет Союзне илес пулсан, вăл вара пĕтĕм тĕнчипе мир тата коллективлă хăрушсăрлăх тăвас тесе Лигă нацине тĕреклетсе вăйлатма тăрашать.

Чăваш АСС Республикинчи Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕн физкультурă инструкторĕсемпе кĕçĕн преподавателсем хатĕрлекен курса

ЗАЙАВЛЕНИСЕМ ЙЫШĂНАÇÇĔ

КУРС ÇАКСЕНЕ ХАТĔРЛЕТ:

райĕçтăвкомсем тата республикăри ирĕклĕ спорт обществисем валли квалификацилĕ инструкторсем, вăтам тата тулли мар вăтам шкулсенчи физкультурăпа вĕрентекен кĕçĕн преподавателсем.

КУРС ÇАКСЕНЕ ИЛЕÇÇĔ:

арçынсемпе хĕрарăмсене 17 çултан пуçласа 35 çулхисем таран, туллимар вăтам шкул чухлĕ пĕлў илнисене тата пĕрремĕш сыпăкри ГТО значок нормисене панисене

ВĔРЕНМЕЛИ СРУК 6 УЙĂХ

Зайавленипе пĕрле çак документсене тăратмалла: туллимар вăтам шкул пĕтерни çинчен аттестат (подлинникне); çурални çинчен справкă; физкультурă йе комсомол организацинчен илнĕ характеристикă; пĕрремĕш сыпăкри ГТО значок нормисене пани çинчен справкă; ĕçленĕ çĕртен хăтарни çинчен справкă; айакран килес текенсем документсемпе пĕрле 40 пуслăх маркă йараççĕ.

ЗАЙАВЛЕНИСЕНЕ 1938 ÇУЛХИ ФЕВРАЛĔН 15-МĔШЧЕН ЙЫШĂНАÇÇĔ.

Зайавленисемпе документсене çак адреспе йамала: ЧАССР, Шупашкар хули, Ленинградская урамĕ, 16, Физкультурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕ.

Курса вĕренме илнисене вĕреннине кура 150 тенкĕрен 250 тенке çити стипенди тўлеççĕ. Айакран килекенсене валли общежитипе выртса тăмали хатĕрсем пулаççĕ.

Курсра вĕренме 1938 çулхи мартăн 1-мĕшĕнчен тытăнаççĕ. Вĕренме физкультурă Комитечĕ чĕннипе кăна килмеле.

Курса вĕренсе пĕтерне хыççăн 2 çултан кайа мар Чăваш АСС Республикинче ĕçлемеле.

Чăваш АСС Республикинчи Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи физкультурăпа Спорт ĕçĕсен Комитечĕ.

3—1

„Чăваш коммунĕ" сырăнса илмелли хакĕсем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха —7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 52. Гор. Чебоксары. Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2. Тираж 14.500. 53—52 вм. 1—1 п. л.